ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 20 ШАМАТКУН № 119 (9028)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
В. Орлов.—Ялхуçалăх культурисене лайăх пăхса ÿстерессишĕн (1 стр.).
Н. Платонов.—Профсоюз организацийĕсен ĕçне куллен ертсе пымалла (2 стр.).
Облпрофсоветăн VIII-мĕш пленумĕ (2 стр.).
ЮЛАШКИ ПОЧТАРАН: Кама çăмăл фельетон çырма? (2 стр.).
В. Алагер.—Н. Я. Бичурин çуралнă ялта (2 стр.).
М. Родионов.—Сессисене хатĕрлесе иртересси çинчен (3 стр.).
Хамăр республикăра (3 стр.).
Н. Цветков. — Тракторсем ĕçлемесĕр тăраççĕ (3 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕнче (4 стр.).
«Нейес дейчланд» хаçат ,ют çĕршывсене сутăнни çынсене тăрă шыв çине кăларать (4 стр.).
Берлин халăхĕ авантюристсене сивлет (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).
Америка авиацийĕ çаплах Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине тапăнать (4 стр.).

Ялхуçалăх пропагандине вăйлатасси çине тимлĕрех пăхмалла

Колхоз строй ялхуçалăх ĕçченĕсене творчествăлла пуçарулăх кăтартма пысăк майсем уçса пачĕ. Социализмла ăмăртура çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн новаторĕсем, ĕç геройĕсемпе ĕç героинисем вуншар пин ÿссе çитĕнчĕç.

Социализмла ялхуçалăх мастерĕсем, малта пыракан колхозсемпе совхозсем тырпул тухăçне ÿстерес, общественлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатас, ялхуçалăх производствин мĕнпур отраслĕсене тĕреклетес тĕлĕшпе пуян опыт пухрĕç. Пирĕн ученăйсем, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен работникĕсем колхозниксемпе тата механизаторсемпе алла аллăн тытăнса ĕçлеççĕ, вĕсем практикăна çĕнĕ выводсемпе тата положенисемпе пуянлатса пыраççĕ.

Ялхуçалăхĕнчи прогрессивлă пуçарусене пур майсемпе те пулăшса пырасси, наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыт çинчен пропаганда сарасси тата вĕсене пурнăçа кĕртсе пырасси—государствăллă пысăк задача пулса тăрать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви çĕрĕç мастерĕсен ĕç меслечĕсене, наука работникĕсен прогрессивлă сĕнĕвĕсене колхозсемпе совхозсен производствине кĕртсе пырассишĕн куллен тăрăшаççĕ. Виçĕ çул каялла пирĕн çĕршывра наука çитĕнĕвĕсемпе малта тăракан колхозсемпе совхозсен практикине обязательнăй йĕркепе производствăна кĕртсе пымалли планлă йĕрке туса хунă.

Иртнĕ тапхăр хушшинче парти, совет тата çĕрĕç органĕсем ялхуçалăх пропагандине лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртерчĕ. Ялхуçалăх мастерĕсен нумай меслечĕсем колхоз ялĕнчи миллионшар ĕçченсен тивлечĕ пулса тăчĕç. Колхозниксемпе совхоз рабочийĕсене агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссенче производствăран уйăрмасăр вĕрентесси анлăн саралчĕ. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче курссенче 3 миллион çынна яхăн вĕреннĕ. Ялхуçалăх пропагандине лайăх йĕркеленĕ çĕрте тырпул тухăçлăхне ÿстерес, общественлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тунă.

Наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта пурнăçа кĕртес тата вĕсем çинчен пропаганда сарас ĕçе Ростов облаçĕнчи Таганрог районĕнче лайăх йĕркеленĕ. Ку ĕçе партипе совет работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем активлă хутшăнаççĕ. Çакă вăл районти мĕнпур колхозсенче тĕштырă тухăçне гектар пуçне 26,7 центнер таран ÿстерме май панă. Иртнĕ çул хушшинче кашни сăвакан ĕнерен 400-шер литр ытларах сĕт суса илнĕ.

Анчах кунашкал тĕслĕхсем, шел пулсан та, нумай мар. Ялхуçалăх пропаганди, наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта пурнăçа кĕртесси, пĕтĕмĕшпе илсен, çителĕксĕр пырать.

Наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта производствăна кĕртмелли, колхозсемпе совхозсенчи рабочисене виçĕ çуллăх курссенче вĕрентмелли плансем çултан-çул пурнăçа кĕмесĕр юлаççĕ. Колхозсемпе совхозсенче новаторсен ĕç меслечĕсемпе наукăри открытисем çинчен каласусемпе лекцисем ытла та сахал иртереççĕ, чылай районсемпе облаçсенче ялхуçалăх выставкисем иртермеççĕ.

Агротехникăпа зоотехникăри прогрессивлă ĕç меслечĕсене производствăна кĕртсе пырасси тата вĕсем çинчен пропаганда сарасси ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрайман-ха. Сайра хутра мар çак паха ĕçе тĕрĕс организацилессинчен усăсăр каласусем, шав ытларах пулать.

Наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта производствăна çителĕксĕр кĕртсе пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл—вырăнти парти, совет, ялхуçалăх органĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем çак ĕçĕн организацилле енĕ çине, уйрăммăн илсен, кадрсем хатĕрлесси çине, техникăпа тухăçлăн усă курасси çине, палăртнă ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси çине кирлĕ пек пăхманни пулать.

КПСС Мордва обкомĕпе Министрсен Совечĕ хăйсен ларăвĕсенче ялхуçалăх пропагандине лайăхлатасси çинчен тăракан ыйтăва пĕр хут çеç мар сÿтсе явнă, постановленисем йышăннă, анчах вĕсем çакăнтан малалла каяйман. Лайăх решенисене организацилле ĕçсемпе çирĕплетмен. Ĕç çине çакăн пек çиелтен пăхнă пирки малта пыракан прогрессивлă ĕç меслечĕсене пурнăçа кĕртмелли государство заданийĕсене тултарман.

Ĕç интересĕсем парти, совет, ялхуçалăх органĕсене наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыт çинчен пропаганда тăвассине тата вĕсене пурнăçа кĕртсе пырассине тĕпрен лайăхлатма, çак ĕç çине çиелтен, ячĕшĕн пăхнине пĕтерме хушаççĕ.

Пропаганда ĕçне тивĕçлипе туса пырассишĕн, мĕнпур çĕннине, малта пыраканнине анлăн пурнăçа кĕртессишĕн партипе совет работникĕн, кашни ялхуçалăх специалисчĕн куллен тăрăшмалла.

Уйрăмах производствăлла пропагандăна колхозсенче, совхозсенче, МТС-сенче лайăхлатасси çине тимлĕн пăхни кирлĕ, мĕншĕн тесен кунта вăйлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешÿ пырать. Ялхуçалăх пропаганди ялхуçалăхĕнче ĕç тухăçлăхне ÿстерес, кая юлнă колхозсене малта пыракансен шайне çитерес, МТС-семпе совхозсен ĕçне лайăхлатас, ялхуçалăх продукчĕсем туса кăларассине ÿстерес ĕçе пăхăнса тăмалла.

Колхозниксене агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссенче вĕрентессине чылай лайăхрах организацилемелле, вĕрентÿ пахалăхне лайăхлатмалла, теорилле занятисене практикăлла ĕçпе çыхăнтармалла. Колхозниксене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене агротехникăпа зоотехникăн малта пыракан меслечĕсемпе паллаштармалла, прогрессивлă ĕçсене пурнăçа кĕртме практикăлла пулăшу памалла. Ку тĕлĕшпе çĕнĕ машинăсемпе усă курасси çинчен ятарласа занятисем иртерни, малта пыракан хуçалăхсенче экскурсире пулни, производство новаторĕсен хăйсен опычĕсемпе ыттисене паллаштарас тĕлĕшпе колхозсене, районсене тухса çÿрени нумай усă пама пултарать.

Колхозсемпе совхозсен производствине уйрăм меслетсене мар, ялхуçалăх культурисемпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартма май паракан мĕнпур прогрессивлă ĕçсене комплекс йĕркипе пурнăçа кĕртсе пыни паха. Паллах, çак ĕçсен комплексне шаблон йĕркипе мар, вырăнти çутçанталăк тата хуçалăх условийĕсене шута илсе пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Ялхуçалăх пропагандине вăйлатас ĕçре колхозниксем, МТС-семпе совхоз работникĕсем валли кăларакан массăлла литература пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах чылай çĕрте çак ĕçе çителĕксĕр организациленĕ-ха. Сельхозгиз тата вырăнти хăшпĕр издательствăсем çаплах ялхуçалăхĕнче малта пыракансен ĕçĕсем çинчен çырнă лайăх кĕнекесем сахал кăлараççĕ.

Наука çитĕнĕвĕсемпе ялхуçалăхĕнче малта пыракан опыта пропагандăлас ĕçе татăклăн лайăхлатас тĕлĕшпе радиопа тата кинопа усă курассине вăйлатмалла. Юлашки çулсем хушшинче ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх 150 яхăн кинофильмсем ÿкернĕ. Анчах та вĕсемпе ытла та çителĕксĕр усă кураççĕ.

Малта пыракан ĕç меслечĕсем çинчен пропаганда сарассишĕн тата вăл меслетсене ĕçе кĕртсе пырассишĕн ялхуçалăх органĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсенчен нумайăшĕ ку ĕçре пассивлă позици тытаççĕ. Челябинск, Кострома тата ытти облаçсенче, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин чылай производствăлла управленийĕсенчи пекех, наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыт çинчен пропаганда сарас тата вĕсене ĕçе кĕртсе пырас тĕлĕшпе ялхуçалăхĕнчи пропаганда органĕсен кăна ĕçлемелле, тесе шутлаççĕ. Çакăн пек шутлани вăл тĕрĕс мар. Мĕнпур çĕннине, малта пыраканнине производствăна кĕртсе пырасси вăл министерствăн мĕнпур тĕп управленийĕсемпе унăн вырăнти органĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Çакăнпа пĕрлех ялхуçалăх пропаганди органĕсемпе наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен ĕçне татăклăн лайăхлатни, вĕсене квалификацилле работниксемпе тĕреклетни, вĕсене тăтăш пулăшса пыни кирлĕ.

Задача çакăн пек: ялхуçалăх пропагандине шайне хăпартмалла, ăна çине тăрса вăйлатса пымалла. Парти, совет, ялхуçалăх органĕсен наукăпа практика работникĕсен творчествăлла пуçарăвне пур майсемпе те аталантарса пымалла, пысăк тухăçлă тырпулпа пысăк тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсен [illegible] нумайлатмалла, мĕнпур çĕннине, малта пыраканнине пулăшса пымалла, наука çитĕнĕвĕсемпе ялхуçалăхĕнчи малта пыракан опыта колхозпа совхоз производствин мĕнпур отраслĕсене хăвăртрах кĕртсе пымалла.

(«ПРАВДА» хаçатăн июнĕн 19-мĕшĕнчи умстатьинчен).

Çур çулхи плана тултарнă

Шупашкарти лента тĕртекен фабрика коллективĕ, çулталăкри плана срокчен тата иртересе тултарассишĕн ăмăртса ĕçлесе, чылай çитĕнÿсем тунă. Июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне фабрика продукци туса кăлармалли çур çулхи плана пур изделисем енĕпе те тултарнă. 96 процент вырăнне пĕрремĕш сорт продукци 98 процент туса кăларнă. Пилĕк уйăх хушшинче фабрика 120 пин тенкĕлĕх çип перекетленĕ. Фабрикăра ĕç нормине рабочисем пурте тултараççĕ.

Фабрика коллективĕ тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармасть. Цехсем, бригадăсем, рабочисем хушшинче продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, материалсем перекетлессишĕн, оборудование тухăçлă ĕçлеттерессишĕн социализмла ăмăрту кулленвăйланса пырать.

Тăван çĕршывра

Уйри итем—автомат

ПАВЛОВСКАЯ, (Краснодар крайĕ), июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер кунта ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районти канашлăвĕ пулса иртнĕ. Колхозниксемпе механизаторсем тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе хăвăрт тата лайăх туса иртермелли майсем çинчен сÿтсе явнă.

Колхозниксем тырпул пухса кĕртме тĕплĕ хатĕрленеççĕ. Кăçал ку ĕçе комплексла механизацилеççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçре техника мĕн чул пулассине çак цифрăсем кăтартаççĕ: районти уй-хирсенче 164 комбайн, темиçе çĕр трактор тата 200 автомашина ĕçлемелле пулать. Электрификациленĕ тата механизациленĕ итемсем 52 туса хатĕрленĕ. Вĕсем тырра хăвăрт тасатса тиеме май параççĕ. Итемсем çинче ĕçлемелли машинăсен хисепĕ нумай ÿснĕ. Павловски районĕнчи колхозсенче ĕçе механизацилени ĕç вăйĕ питĕ нумай перекетлеме пулăшать.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем «За мир и труд» колхозăн автоматизациленĕ итемĕпе питĕ интересленнĕ. Ку итем çинче тырă йышăнас, тасатас, типĕтес тата тиес ĕçе пĕтĕмпех автоматсемпе туса пыраççĕ. Итем çинче мĕн пурĕ те 2 çын—машинист тата ăна пулăшакан ĕçлемелле пулать.

Тырă тасатакан çак фабрикăна мĕнле тунă-ха? Итем территорийĕнче асфальт сарса 450 тăваткал метр пысăкăш площадка тунă. Площадка варринче икĕ камера—пĕр камери илсе пынă тырра йышăнать, тепри—тиесе ярать. Тырă йышăнакан камера умĕнче эстакада пур, ăна 35 градус тайлăк тунă. Тепĕр енче—тырă тасатмалли хăватлă агрегат ларать, ăна колхозри рационализаторсем тунă. Тырă йышăнакан камерăна тырă тасатакан машинăпа пĕрлештернĕ. Машинăн тепĕр енче—тырă тиекен камера. Тасатнă тырра ятарласа тунă элеваторпа усă курса тиеççĕ.

Итем çинчи ĕçсем мĕнле йĕркепе пулса пыраççĕ-ха? Автомашинăпа комбайн çинчен тырă тиесе килнĕ. Автомашинăпа каялла чактарса эстакада çине кĕртеççĕ. Вара тырă хăех йышăнакан камерăна юхса анать. Тырă йывăрăшĕ тырă тасатакан машинăна автоматла майпа ĕçе ярать. Тырă йышăнакан камерăран элеватор тăрăх тасатакан вырăна пырать. Тасатнă тырă тиемелли камерăна каять, унтан вара элеватор тырра автомашина çине тиет.

Итем çинчи механизмсем пурте электричество вăйĕпе ĕçлеççĕ. Машинист, хăйне пулăшаканпа пĕрле ĕçлесе, талăкра 250—300 тонна тырă тасатать.

ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕÇÇĔ ТАТА ЯЛХУÇАЛĂХ ПРОДУКЧĔСЕМ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

ДЕРБЕНТ. Тырпул пухса кĕртес ĕç сарăлсах пырать. Кăнтăр Дагестанри колхозсем кĕрхи урпа пухса кĕртеççĕ. Дербент районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă пама пуçланă.

Таджикистанри Сталинабад, Дангарин тата ытти районсенчи колхозсем вăрринчен çу кăлармалли йĕтĕне пухса кĕртме тытăннă. Кăçал, малтанхи çулхипе танлаштарсан, йĕтĕн 10 пин гектар ытларах акнă. Йĕтĕн пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекен комбайнсен шучĕ 10 хут ытла ÿснĕ.

Йĕтĕн пухса кĕртнĕ вăхăтрах колхозсем государствăна йĕтĕн вăрри параççĕ. (ТАСС).

Мускаври Ф. Э. Дзержинский ячĕпе тăракан «Трехгорная мануфактура» комбинат коллективĕ чĕртавар перекетлĕ расходлассишĕн, производствăра вырăнсăр тăкаксем пулнине пĕтерессишĕн кĕрешет. Комбинатри пир тĕртекен фабрикăра хозрасчетлă бригадăсем 80 ытла. Вĕсем кăçалхи пĕрремĕш кварталта 48 пин тенкĕ перекетленĕ. Фабрикăри ытти бригадăсем те перекетлĕхшĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пир тĕртекен фабрикăра. Мастер помощникĕ Н. Букина (сулахайри) тата комсомолецсен-çамрăксен бригадин бригадирĕ Л. Жаричева.

Э. ЕВЗЕРИХИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пир-авăр промышленноçĕ валли çĕнĕ машинăсем

ТАШКЕНТ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ташкентри пир-авăр промышленноçĕ валли машинăсем тăвакан заводăн сăнавсем тумалли цехĕнче икĕ çĕнĕ машина сутăлса лараççĕ. Ку машинăсем — пир-авăр промышленноçĕнчи техникăн çĕнĕ тĕслĕхĕсем. Вĕсене завод конструкторĕсем хатĕрленĕ проектсем тăрăх тунă. Çĕнĕ машинăсем—çип пĕтĕрмелли тата арламалли «К-66-1» тата «КМ-66-1» маркăллă машинăсем. Çĕнĕ оборудовани çĕр мамăкĕнчен пĕтĕрнĕ çип питĕ лайăх арласа хатĕрлеме май парать. Халĕ тунă машинăсем халиччен пулнă машинăсенчен пĕчĕкрех, çапах та вĕсем пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

«Таштекстильмаш» завод пирĕн çĕршывра çĕр мамăк çипĕ арламалли машинăсем туса кăларакан пысăк предприятисенчен пĕри пулса тăчĕ. Ку завод туса кăларнă агрегатсене çĕршыври пир-авăр промышленноçĕн нумай предприятийĕсенче курма пулать. Завод туса кăларакан машинăсене çак пилĕксуллăхра РСФСР-па Украинăра, Прибалтикăри республикăсенче тăвакан çĕнĕ предприятисенче вырнаçтарса лартаççĕ.

«Таштекстильмаш» оборудовани туса кăларассине нумай ÿстернĕ. Пиллĕкмĕш пилĕксуллăхра туса кăларнă машинăсем малтанхи вăхăтра туса кăларнă машинăсенчен нумай лайăхрах. Заводри специалистсем хатĕрленĕ проектсем тăрăх çĕнĕ йышши 6 машина туса кăларма пуçланă.

ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне «Таштекстильмаш» заводăн главнăй конструкторĕ Н. П. Фомин юлташ çапла каласа панă:

— Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче конструкторсем умне машинăсем тунă чухне металл сахалрах пĕтерес, продукци пахалăхне лайăхлатас задача кăларса тăратнă. Эпир, парти заданине пурнăçласа, пир-авăр тĕртекенсемпе туслă ĕçлесе пыратпăр, вĕсем валли лайăх машинăсем туса кăларма тăрăшатпăр. Машинăсене лайăхлатса пыни оборудование пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеттерме, брак пулнине чакарма тата рабочисен ĕçне çăмăллатма пулăшать.

КОММУНИСТСЕМ ТИРПЕЙЛĔХ РЕЖИМĔШĔН КĔРЕШЕССИНЕ ЕРТСЕ ПЫРАÇÇĔ

ЛЕНИНГРАД, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Свердлов ячĕпе тăракан станоксем тăвакан заводри партбюро пуçарнипе тирпейлĕх режимĕ çинчен сÿтсе явма хуçалăх активĕн канашлăвне иртернĕ. Цехсенчи партипе комсомол организацийĕсен пухăвĕсенче те çак ыйтăва анлăн сÿтсе явнă.

Производствăри тĕп участоксенче пуринче те коммунистсем тирпейлĕх режимне пурнăçлассишĕн кĕрешессине ертсе пыраççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ иртнĕ икĕ уйăх хушшинче материалсемпе укçа-тенкĕ перекетлĕ расходлама май паракан хаклă сĕнÿсем нумай панă. Çапла вара металл расходлассине нумай чакарнă. Кăçалхи çул предприяти чугун, хурçă тата тĕслĕ металсем 100 тонна ытла перекетленĕ. Завод тупăшлă ĕçлет.

Завод администрацийĕ рабочисем панă сĕнÿсене пурне те пăхса тухнă. Шутласа пăхнă тăрăх, йышăннă сĕнÿсене пурнăçлани планран иртерсе çур миллион тенкĕ тупăш илме май парать.

Çĕнĕ предприятисем

КИЕВ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Украинăра промысла кооперации предприятийĕсен шучĕ ÿссех пырать.

Киевра çĕр мамăк çипĕ арламалли фабрика ĕçлеме пуçланă. Ку фабрикăра пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен оборудовани вырнаçтарса лартнă. Производствăри тĕп ĕçсене пĕтĕмпех автоматизациленĕ. Çакăн пек предприятисем Одессăра, Херсонра тата Ворошиловградра тăваççĕ.

Удэгеецсен ялĕнче

ВЛАДИВОСТОК, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Пожарски районĕнчи удэгеецсем пурăнакан Сиян ялĕнче паян стадион туса пĕтернĕ. «Колхозник» спорт обществин членĕсем валли футболла выляммалли лайăх уй, волейболла, чушкăлла выляммалли площадкăсем, çăмăл атлетика енĕпе занятисем иртермелли вырăнсем тунă.

Ку ял чугун çултан 200 километрта. Çапах та ухута ĕçĕпе пурăнакан удэгеецсем культурăллă пурăнаççĕ. Тайга варринче, Бикин юханшывĕ хĕрринче, ĕлĕк тĕттĕм юртăсем çеç пулнă. Халĕ кунта вуншар йывăç çуртсем туса лартнă. Ял урамĕсем тÿп-тÿрĕ. Ялта пурăнакансен нумайăшĕн радиоприемниксем, патефонсем, музыка инструменчĕсем, велосипедсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем пур.

Ялта çичĕ çул вĕренмелли шкул уçнă. Шкул çумĕнче интернат пур. Çавăн пекех ялта клуб, библиотека, больница, почта уйрăмĕ тата магазин ĕçлеççĕ. Кăçхине удэгеецсем клубра кинофильмсем кураççĕ. Клуб сцени çинче художествăллă пултарулăх кружокĕн членĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Лекцисем вуласа параççĕ, каласусемпе вулакансен конференцийĕсене иртереççĕ. Ялти кашни киле 3—4 тĕрлĕ хаçат-журнал килсе тăрать.

Удэгеецсем хушшинче хутла пĕлменнисем çук. М. Канчуга, П. Мунов, С. Дунгай, М. Уза тата ыттисем те аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн хăйсен ялне таврăннă. Вĕсем халĕ «Охотник» ятлă промысла артелĕнче ертсе пырас ĕçе туса пыраççĕ тата шкулта преподавательсем пулса ĕçлеççĕ.

Казахстанри совхозсем тырă вырма тухас умĕн

АЛМА-АТА, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Кăнтăр Казахстанри «Дарбаза-Куюк», «Сыр-Дарья» тата ытти колхозсен уй-хирĕнче тырпул пулса çитет. Часах тырă вырма тухмалла.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе пĕтĕмпех механизацилеççĕ. Совхозсен уй-хирне пиншер комбайн тухаççĕ.

Пур совхозсенче те итемсем çинче тырă тасатас тата тиес ĕçе механизацилеççĕ. 250 ытла итемсене электрификациленĕ. Тырă тасатмалли пин ытла машинăсем электричество вăйĕпе ĕçлемелле пулать. Çакă 10 пин çын туса пымалли ĕçе машинăсемпе туса пыма май парать.

Тырă тасатнă çĕрте Федоровски тĕштырă совхозĕнчи новаторсем тунă веялкăсемпе ĕçлемелле пулать. Пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен çак веялка талăкра 100 тонна ытла тырă тасатма май парать. Механизациленĕ 50 веялка ĕçлеме хатĕр тăраççĕ.

Тырă типĕтме хатĕрленес ĕçе уйрăмах тимлĕн туса пынă. Совхозсенче пĕр вырăнта ĕçлекен сушилкăсем 140 тата куçса çÿрекен сушилкăсем 45 пулаççĕ.

Çĕнĕ прибор

Грузири гидротехникăпа мелиораци наукăпа тĕпчев институчĕн коллективĕ тăпрари нÿрĕке виçмелли çĕнĕ прибор туса хатĕрленĕ. Ку прибор хăйĕн конструкцийĕ тĕлĕшĕнчен ансат, унпа кашни колхозник усă курма пултарать. Вăл тăпрари шыв запасĕ мĕн чухлĕ пулнине питĕ тĕрĕс кăтартса парать, çĕре вăхăтра шăварса тăма пулăшать. Кун пек приборсем 100 туса кăларнă ĕнтĕ. Вĕсемпе Грузири колхозсемпе совхозсенче ăнăçлă усă кураççĕ. (ТАСС).

Ялхуçалăх культурисене лайăх пăхса ÿстерессишĕн

ÇĔРПУ. Сталин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир ĕçченĕсем ялхуçалăх культурисен тухăçне ÿстерессишĕн пыракан кĕрешÿре çултан çул пысăк çитĕнÿсем тăваççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ хура тăпраллă мар çĕрлĕ облаçсенче пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра тырпул тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе панă директивăсене эпир срокчен пурнăçлама задача лартрăмăр.

Совет государстви пире ытларах та ытларах пулăшнине тата хамăрăн вăйсемпе резервсене шута илсе, пирĕн колхозниксем кăçал çакăн пек обязательствăсем йышăнчĕç: тĕштырăсем вăтам шутпа кашни гектар пуçне 100 пăтран кая мар, выльăх кăшманĕ—240, çĕрулми—160, кантăр вăрри—10, сÿс—8 центнертан кая мар туса илмелле.

Паллах ĕнтĕ, çавăн пек пысăк обязательствăна чăннипех пурнăçлас тесен, агротехника кăтартăвĕсене тÿррĕн пăхăнса ĕçлемелле. Эпир çавăн пек ĕçлеме тăрăшатпăр та.

357 гектар çинчи ыраша эпир иртнĕ кĕркунне вырăнти удобренисемпе лайăх çемçетнĕ çĕр çине пысăк пахалăхпа акса хăварнăччĕ. Кăçал çуркунне мĕнпур çĕр лаптăк çинчи калчана сÿрелерĕмĕр, кашни гектар çине 1,0 центнер аммиаклă селитра, 2,0 центнер суперфосфат, 0,5 центнер хлорлă кали сапса апат патăмăр.

Сураки ĕçĕсене агротехника тĕлĕшĕнчен çÿлти пусăмра иртерес тесе, пирĕн колхозниксем вăй хĕрхенмесĕр тăрăшрĕç. Тулă вăрлăхне пĕрчĕлетнĕ суперфосфатпа хутăштарса акрăмăр. Сĕлĕпе пăрçа акмалли участоксем çине культиваци тăвас умĕн гектар пуçне 2,0 центнер суперфосфат сапрăмăр. Çуртрисем мĕнпур çĕр лаптăкĕ çинче тикĕс те вăйлă ÿсеççĕ.

Эпир тырă калчисене таса тытасси çине тимлĕн пăхатпăр. Хăшпĕрисем çапла шутлаççĕ: калча çинче çумкурăксем питĕ сайра пулсан, вĕсене сумлатпăр тесе калчана таптани мĕне кирлĕ? Кун пек шутлани тĕрĕс мар. Пĕр енчен, çумкурăксем питĕ хăвăрт ĕрчеççĕ. Сăмахран, пĕр тĕп пиçенрен шутсăр нумай вăрлăх пулнине кашни колхозник пĕлет. Тепĕр енчен çумкурăксем ялхуçалăх культурисене сиенлекен чирсене ĕрчеме пулăшаççĕ.

Хамăр колхозра эпир çуртри калчисене çеç мар, нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхлăх акнă участокĕсене те çумкурăксенчен тасатрăмăр, малашне те хытă асăрхасах тăратпăр.

Общественлла выльăх-чĕрлĕх шучĕ ÿссе пынă май, эпир выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тĕреклетесси, уйрăмах сĕтеклĕ апатсем акса тăвасси çине хытăрах пăхатпăр.

Колхозăн пусă çаврăнăшĕнче нумай çул ÿсекен курăксем тата тымарçимĕçсем акăнакан çĕр лаптăкĕ ÿсет. 50 гектар çине хутăш акнă люцернăпа тимофеевкăна, 70 гектар çинчи клеверпа тимофеевкăна çуркунне кашни гектар пуçне 1,5 центнер суперфосфат тата 1,0 центнер хлорлă кали сапса апат патăмăр.

Курăксене апат пани усăллине пирĕн колхозниксем халĕ куçпа кураççĕ. Люцернăпа тимофеевкăна хутăштарса акнă курăк ÿссе çитĕнчĕ. Июнĕн 9-мĕшĕнче ăна çулма тытăнтăмăр. Çулнă хыççăнах ку участок çине гектар пуçне 1,0 центнер суперфосфат, 0,5 центнер хлорлă кали сапса апат паратпăр. Иккĕмĕш хутне август уйăхĕн пуçламăшĕнче çулатпăр. Çапла эпир икĕ хут çулса гектартан 60 центнертан кая мар пысăк пахалăхлă утă пухса илетпĕр. Анчах кунпа та ĕç вĕçленмест-ха. Сентябрь уйăхĕнче виççĕмĕш хут çулнă курăкна силос хыватпăр.

Минераллă удобренисемпе апат панă, хыт-хура çумкурăксенчен тасатнă клевер та питĕ вăйлă. Вăл 10—15 процент таранччен чечеке ларсан, ăна пирвайхи хут çулатпăр, каллех апат паратпăр. Иккĕмĕш хутне август уйăхĕ пĕтнĕ чухнелле çулмалла пулать. Клеверпа тимофеевка утине те гектар пуçне 60 центнертан кая мар пухса кĕртетпĕрех.

Акнă культурăсене сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен сыхласси—ответлă ĕç. Пирĕн условисенче купăстапа хăмлана уй пăрси, пăрçа калчине симĕс хурт ерсе пысăк сиен кÿреççĕ. Кăçал çанталăк условийĕсем лайăх пулнипе ун пек хурт-кăпшанкăсем ĕрчени курăнмасть-ха. Анчах пирĕн хатĕр тăмалла. Çавăнпа та эпир «Дуст» тата «Гексахлоран» текен препаратсене малтанах çителĕклĕ таран кÿрсе хутăмăр.

Тымарçимĕç акнă, çĕрулми тата пахчаçимĕç лартнă участоксенче пысăк ĕçсем пуçланчĕç.—Уй-хир бригадисем шăтса тухнă çĕрулмие кăпкалатма тата купалама тытăнчĕç.

Кăçал эпир 4,0 гектар çинче купăста лартрăмăр, вăл шутран пĕр гектар çинчи—ир пулакан сортлă купăста. Кунта халĕ рет хушшисене кăпкалатаççĕ, çумкурăксенчен тасатаççĕ. Ир пулакан купăста пуçĕсем чăмăртанма пуçларĕç ĕнтĕ, июль уйăхĕнче ăна сутма тытăнатпăр.

0,20 гектар çинче туса илнĕ симĕс сухана сутса эпир 8 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр. Пирвай шутласа пăхнă тăрăх, пĕр гектар çине лартнă ирхи купăста пире 50 пин тенкĕрен кая мар тупăш памалла. Çакна шута илсе, пирĕн колхозниксем пахча-çимĕç плантацийĕнче халĕ пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхозăн уй-хирĕсенче лаптăкăшпех вăйлă тырпул çитĕнет. Ăна лайăх пăхса ÿстерсе тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртсе, эпир хамăр çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлатпăр.

В. ОРЛОВ,
Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Облпрофсоветăн VIII-мĕш пленумĕ

Çак кунсенче облпрофсоветăн VIII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум республикăри профсоюз организацийĕсем политикăлла воспитанипе культурăлла-массăлла ĕçе мĕнле туса пыни çинчен сӳтсе явнă. Ку ыйтупа облпрофсовет председателĕ **М. М. Романова** юлташ доклад турĕ.

— Социализмран майĕпен коммунизма куçса пынă тапхăрта,—тет докладчик,—совет çыннисене коммунизмла воспитани парас ĕç çав тери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Совет Союзĕн Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историлле решенисемпе И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ ĕçсыннисемшĕн коммунизмшăн кĕрешмелли аслă программа пулса тăчĕç.

Ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре профсоюз организацийĕсем тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ. Уйрăмах профсоюзсен культурăпа çутĕç учрежденийĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăри профсоюз организацийĕсен 37 клуб, 36 библиотека, тăватçĕре яхăн хĕрлĕ кĕтессем пур. Киноустановкăсем те чылай.

Нумай клубсемпе хĕрлĕ кĕтессем, библиотекăсем политикăлла-массăлла тата культурăлла ĕçĕн центрĕ пулса тăчĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене предприятисемпе учрежденисен задачисене пăхăнтарса туса пыраççĕ, рабочисемпе служащисене тата интеллигенцие политикăлла-культурăлла тавракурăма ӳстерме, социализмла ăмăртăва творчествăлла вăйлатса пыма, ĕçĕн çĕнĕ меслетне вĕренме пулăшаççĕ.

Докладчик Улатăр станцийĕнчи чугун çул работникĕсен клубĕпе Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи клубăн тата ытти культура учрежденийĕсен лайăх ĕçĕ çинчен каласа парать.

Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи (рабочком председателĕ Плешков юлташ) рабочисем хушшинче политикăлла-массăлла ĕç лайăхланса пырать. Юлашки вăхăтра кунти клубпа хĕрлĕ кĕтессенче тата ĕç вырăнĕсенче рабочисене обществăлла-политикăлла темăсем тăрăх 58 лекци вуласа панă. Производствăлла-техникăлла темăсем тăрăх лекцисем иртерме лекторсен группи тунă. Вăрманпромхозри лекторсен группи инженерсемпе техниксене тата малта пыракан рабочисене — 13 çынна пĕрлештерсе тăрать. Лекторсен группин вăйĕпе юлашки вăхăтра 21 лекци иртернĕ.

Мерчĕк вăрман участокĕнчи рабочисем хăйсен хĕрлĕ кĕтесĕсенче юлашки тăватă уйăхра 17 лекци итленĕ, унта 6 хут литература касĕсем, 72 хут политикăлла калаçусем иртернĕ, кунта рабочисене хаçат-журнал тăтăшах вуласа параççĕ. Хĕрлĕ кĕтесре 31 номер «çиçĕм-хаçат», 21 номер «мухтав листокĕ», 13 «боевой листок» кăларнă. Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи клуб та хăйĕн ĕçне лайăхлатса пырать. Кун пек тĕслĕхсем республикăра сахал мар.

Докладчикпа пренире тухса калакан юлташсем, хăшпĕр ӳсĕмсемпе пĕрлех, профсоюз организацийĕсен политикăлла-массăлла тата культурăлла ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Профсоюз организацийĕсен хăшпĕр культура учрежденийĕсем рабочисемпе служащисене партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене вĕрентес ĕçе кирлĕ таран йĕркелемен. Хăшпĕр профсоюзсен обкомĕсем клубсемпе библиотекăсен, хĕрлĕ кĕтессен ĕçне халĕ те тивĕçлипе йĕркелесе çитермен.

Вăрнарти заводри завком (председателĕ Чугунников юлташ) ĕçсыннисем хушшинче политикăлла, культурăлла-массăлла ĕçе ытла та çителĕксĕр туса пырать. Хăшпĕр культура учрежденийĕсенче (Канаш чугун çул станцийĕнчи, Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи, Çĕмĕрлери «Большевик» заводри клубсенче) наглядлă агитаци вăйне хаклаççĕ.

Лекцилле пропаганда — ĕçсыннисене коммунизмла воспитани памалли тĕп меслетсенчен пĕри пулса тăрать. Анчах та хăшпĕр профсоюз организацийĕсен вырăнти комитечĕсем çак кирлĕ ĕçе хакламаççĕ.

Пренире пурĕ 14 çын тухса каларĕ.

Улатăр станцийĕнчи чугун çул работникĕсен клубĕн правлени председателĕ **Устинова**, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи клуб работникĕ **Абакумов** юлташсем хăйсен ĕç меслечĕпе паллаштарчĕç.

Чугун çул работникĕсен клубĕ хăйĕн мĕнпур ĕçне партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенчен тухса тăракан задачăсемпе сыхăнтарать. Клубра обществăлла-политикăлла тата наукăлла темăсем тăрăх тăтăшах лекцисемпе докладсем иртереççĕ. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта кунта партин XIX-мĕш съезчĕн историлле решенийĕсемпе И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ çинчен рабочисемпе служащисене 13 лекци вуласа панă.

Чугун çул работникĕсем хăйсен клубĕнче хулари паллă çынсемпе, стахановецсемпе, хула Совечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсемпе тĕл пулаççĕ, малта пыракан ĕç опычĕпе анлăн паллашаççĕ. Клуб правленийĕ наглядлă агитаци вăйне тивĕçлĕ вырăна хурса хаклать. Правлени мĕнпур ĕçсене малтан çирĕплетнĕ план тăрăх тăвать. Клубăн ĕç планне рабочисемпе служащисем те пĕлсе тăраççĕ.

Устинов юлташ лекцилле пропаганда ĕçне ытти обществăлла организацисене активлăрах хутшăнтарма кирли çинчен калать.

— Шупашкартан пирĕн хулана искусство работникĕсем пыркалаççĕ, — тет вăл.—Анчах вĕсем пирĕн ĕçе лайăхлатма пулăшмаççĕ, хăйсен постановкисене кăтартаççĕ те... тухса каяççĕ. Эпир вĕсене совет искусствин ӳсĕмĕсем çинчен темиçе хутчен те лекцисем вуласа пама ыйтнăччĕ, анчах вĕсенчен пĕри те ку таранччен пирĕн ыйтăва тивĕçтермерĕ.

Çĕмĕрлери сĕтел-пукан тăвакан комбинатри клуб представителĕ Абакумов юлташ профсоюз обкомĕсем художествăллă пултарулăх коллективĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе сахал пулăшни çинчен каларĕ.

Хутпа вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен профсоюз обкомĕн председателĕ Ильин юлташ, вăрман хатĕрлев организацийĕсенче ĕçсыннисене политикăлла воспитани парас ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕ.

— Вăрман ĕçлекенсем хушшинче лекцилле пропагандăпа художествăлла пултарулăх коллективĕсен ĕçне йĕркелеме,—тет Ильин юлташ, — вырăнти интеллигенци пысăк пулăшу пама пултарать. Анчах хăшпĕр профсоюзсен обкомĕсем пире çак ĕçре сахалтарах пулăшаççĕ. Облпрофсоветпа ытти тивĕçлĕ обкомсем те вăрманта ĕçлекен рабочисене воспитани парас ĕçе активлăрах хутшăнмалла.

КПСС Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарĕ **Романов** юлташ профсоюз обкомĕсене вырăнти организацисене пулăшманшăн хытă критиклерĕ.

— Финанспа банк работникĕсен обкомĕнчи работниксем районсенчи организацисенче ытла та сахал пулаççĕ. Вĕсем вырăнсенче пулкаласан та ĕçе лайăхлатма тивĕçлипе пулăшмаççĕ.

Обком представителĕ Матвеева юлташ Сĕнтĕрвăрринчи профорганизацисенче пулнă, анчах та вĕсен ĕçне тĕплĕн тишкермесĕрех Шупашкара тухса кайнă. Кунти профсоюз членĕсем хушшинче ĕç дисциплини ытла та начар пусăмра тăрать. Профсоюз обкомĕн представителĕ вара воспитани ĕçне лайăхлатас ыйтупа пачах та интересленмен. Кун пек тĕслĕхсем профсоюз обкомĕн ĕçĕнче сахал мар тĕл пулаççĕ.

— Улатăрти пăравуссем юсакан заводра ĕçсыннисем хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе вăйлатма пур условисем те çителĕклĕ. Анчах та заводра рабочисен ĕçпе пурнăç культурине ӳстерессишĕн тăрăшни сук-ха,—тет культура работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ **Чиркова** юлташ. — Ĕçсыннисем хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатас тесен, профсоюз завкомĕн чылай вăй хурса ĕçлемелле пулать. Кунта наглядлă агитацие те ытларах вăйлатма кирлĕ.

Пренире çавăн пекех облпрофсовет работникĕсем **Нестеровпа Никишев**, Шупашкарти учительсен çурчĕн правлени председателĕ **Кондрахин**, апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен профсоюз обкомĕн председателĕ пулнă **Никифоров**, Канашри вагонсем юсакан заводри клуб правленийĕн председателĕ **Левицкий**, потребительсен кооперацийĕнче ĕçлекенсен профсоюз обкомĕн председателĕ **Григорьева** тата ытти юлташсем тухса каларĕç.

Пленум политикăлла воспитанипе культурăлла-массăлла ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Пленум **А. С. Ягодкина** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, облпрофсовет секретарĕнчен хăтарчĕ, облпрофсовет секретарĕ пулма **Ф. Н. Никифоров** юлташа çирĕплетрĕ.

Пленумра ВЦСПС представителĕ **Н. Н. Кондаков** юлташ пулчĕ.

Юлашки почтăран

Кама çăмăл фельетон çырма?

Чкаловски районĕнчи «Авангард» хаçат хăйĕн 48-мĕш номерĕнче «Кама çăмăл пурăнма Туçара?» ятлă фельетон пичетленĕ. Районта пурăнакансем çак фельетона 1950 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче тухнă «Чăваш Коммуни» (халĕ «Коммунизм ялавĕ») хаçатри «Пуху хыççăн...» ятлă фельетонран çырса илнине асăрхамасăр хăварма пултараймарĕç.

Тĕслĕхсем илсе кăтартăпăр.

«Чăваш Коммуни» хаçатра çапла çырнă: «Пуçланчĕ калаçу тупнă темăпа: камă пурăнма çăмăлрах Мамăшра?».

«Авангард» хаçатра: «Пуçланчĕ калаçу çак темăпа: кама çăмăл пурăнма Туçара?».

«Чăваш Коммуни» хаçатра:

«—Да!—терĕç ыттисем.—Ку пырать сывăха».

«Авангард» хаçатра:

«—Да!—терĕç ыттисем.—Ку пырать сывăха».

«Чăваш Коммуни» хаçатра:

«—Эх, хăямат!—терĕ татах теприйĕ.—Кĕçех манăçа юлатчĕ пĕрийĕ.

— Кам?

— Вулав çурчĕн заведующийĕ.

— Кузнецова?

— Çавă!

— Чăнах та, пачах курмастпăр ăна халăх хушшинче!

— Пачах путланчĕç вулав çурчĕн массăллă ĕçĕсем!

— Тухма пăрахрĕç стена хаçачĕсем, пачах хупăнчĕç чаршавсем!»

«Авангард» хаçатра:

«—Эх, хăямат!—терĕ пĕрийĕ.—Кĕçех манăçа юлатчĕ теприйĕ.

— Кам?

— Вулав çурчĕн заведующийĕ.

— Алексеев-и?

— Çавă!

— Чăнах та, курма çук ăна халăх хушшинче!

— Пачах путланчĕç вулав çурчĕн массăллă ĕçĕсем, яланлăхах хупăнчĕç чаршавсем!».

«Чăваш Коммуни» хаçатра:

«—Çаплах!—терĕç пурте пĕр харăс тарăхса.—Ăна пурăнма та япăх мар Мамăшра!».

«Авангард» хаçатра:

«—Тĕрĕс,—терĕç пурте пĕр харăс тарăхса.—Ăна пурăнма та япăх мар Туçара!».

«Чăваш Коммуни» хаçатри предложенисем фельетонра татах та пур. Республика хаçатĕнчи фельетон пысăкрах, «Авангард» хаçатра ăна кĕскетсе пичетленĕ, юрă пращникĕ çинчен икĕ предложени хушса хунă. Фельетон хатĕр!

Автор, фельетона вĕçлесе, «Чăваш Коммуни» хаçатри сăмахсемпех («Ишлей», «Мамăшра» сăмахсене кăларса хăварса) çапла çырать: «Эпĕ калаçăва хутшăнман, çырса пымалла пулчĕ ман. Калаçни ахалех ан юлтăр, ун çинчен пурте пĕлмелле пултăр. Туçара пулса иртнĕ калаçу çинчен районти тивĕçлĕ организацисем пĕлсе тивĕçлĕ выводсем тусан питех те аван пулĕччĕ».

«Кама çăмăл пурăнма Туçара» фельетон айне «И. М.» тесе алă пуснă. Вăрласа çырнă йĕркесен айне автор хăйĕн хушаматне лартма шикленнĕ пулас.

Юлашкинчен, фельетонри сăмахсемпе усă курса, çакна каласа хăвармалла: калаçни ахалех ан юлтăр, ун çинчен пурте пĕлмелле пултăр.

Хаçат редакторĕ И. Мешков юлташ пĕлтермĕ-ши: кама çăмăл фельетон çырма?

Н. Я. Бичурин çуралнă ялта

Çантăлăк [illegible] паян ĕнтĕ июнь хĕвелĕ ешĕл те сĕткенлĕ [illegible] сапса илемлетет. Уй-хирсенче [illegible] пек, [illegible] рă хумханать. Тӳпе [illegible] тăрă, [illegible] усă, усă. Çĕршыв [illegible].

Шупашкартан тухса Октябрьски районти Шĕнерпуçне çитиччен сутçанталăк илемĕпе киленсе пытăмăр эпир. Акă пирĕн автобус аслă султан сулахаялла пăрăнать те тин çеç шăркана лармя пуçланă ыраш хушшинелле чăмать. Шĕнерпуçнелле пăрăнса кĕрекен çул иккĕн ку. Шупашкарпа Сĕрпӳ сывăхĕнчи пекех, кунта та тырă [illegible] лайăх, [illegible] ри калчисем те питĕ аван. Анчах кунталла уй-хир сăн-сăпачĕ [illegible] ма пуçлать, час-часах [illegible] тĕл пулаççĕ. Ку енчи колхозсем хăмла ытларах лартса тăваççĕ-мĕн. Кĕçех эпир кăшт айлăмарахра, тарăн çырман икĕ енне вырнаçса ларнă Шĕнерпуçне çитсе кĕретпĕр.

Шĕнерпуç — вырăссен паллăран та паллă ученăйĕ, востоковечĕ Н. Я. Бичурин (Иакинф) çуралса ӳснĕ ял. Ялти пӳртсене, ешĕл садсемпе йывăççене, шкул умĕнче сарăлса выртакан çереме, темшĕнçке, пурне те ытараймасăр пăхатăн. Çак ялта, çак вырăнта, XVIII ĕмĕр вĕçленнĕ вăхăталла, пĕчĕк ача чупса çӳренĕ. Паллах, çак ялти ача-пăчасемпе вылянă та вăл, сывăхри катана та çӳренĕ-и тен. Çакăнти сывлăшпа сывланă, çакăнти илемлĕ сутçанталăк чĕрçийĕ çинче ӳснĕ. Вăл ача, чăваш ачи, Никита Яковлевич Бичурин (Иакинф) пулнă. Вăл пурăннă вăхăтра ял сăнарĕ урăхларах пулнă-тăр, хальхи шурă сӳртсем вырăнĕнче пĕчĕкçеç те чăлăш-чалăш хура пӳртсем тайăлкаласа ларнă пулĕ... Паллă, чăваш хресченĕн пурнăçĕ савăк пулман. Апла пулин те çак ял вырăссен тĕнчипе паллă та чаплă ученăйне, востоковедне çуратса ӳстернĕ. Çавăнпа-тăр, çак ял халĕ пирĕншĕн питĕ сывăх, тăван ял пек туйăнса каять. Эпир ситсе кĕнĕ чух ялти колхозниксемпе колхозницăсем, шкулта вĕренекен çамрăксем шкул умне пухăнса тăнă. Паян кунта чăваш халăхĕ хушшинчен тухнă профессорсем, ученăйсем, писательсем килсе çитрĕç. Халăх вĕсене ырă кăмăлпа, хапăл туса кĕтсе илчĕ.

Паян, июнĕн 16-мĕшĕ, паллă кун, çак ялта çуралса ӳснĕ вырăссен ученăйĕ, востоковечĕ Н. Я. Бичурин (Иакинф) вилнĕренпе 100 çул çитнине паллă тунă май, Чăвашсен чĕлхен, литературăн тата историн наукăçа тĕпчев институчĕ ятарласах научнăй сесси иртерет. Сессие уçас умĕн институт директорĕ, истори наукисен кандидачĕ Т. Г. Гусев юлташ кĕске сăмах каларĕ, институт ячĕпе колхозниксене саламларĕ, халăх ун сăмахне хыттăн алă çупса йышăнчĕ.

Шкул пахчине пухăнса ларнă халăха Н. Я. Бичурин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен институтăн [illegible] сотрудникĕ, истори наукисен кандидачĕ, доцент Н. Г. Григорьев юлташ каласа пачĕ. Вырăссен XIX ĕмĕрти паллă[illegible] те паллă востоковечĕ Н. Я. Бичурин — вырăс наукин мĕн те пури паллă ĕçсем туни çинчен сессие пухăннисене филологи наукисен докторĕ С. П. Горский профессор каласа пачĕ.

Н. Я. Бичурин хăй пурăннă вăхăтра вырăссен малта пыракан паллă çыннисемпе те сахал мар хутшăннă иккен, вĕсенчен [illegible] тусĕ те пулнă. Ун çинчен сессире институтăн ученăй секретарĕ В. Д. Кузьмин тĕплĕн каларĕ.

Сессие пухăннисем Чăваш халăх поэтне П. П. Хузангая хыттăн алă çупса кĕтсе илчĕç. Вăл хăйĕн Н. Я. Бичурина халаласа çырнă сăввине вуларĕ. Чăваш халăх поэчĕ, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ С. В. Эльгер Шĕнерпуçĕнчи Владимир Маяковский ячĕпе тăракан колхоз çыннисене хĕрӳллĕ салам каларĕ, вăл вĕсене, çак чаплă ял çыннисене, ырлăхпа сывлăх, малашне тата ăнăçлăрах ĕçлеме, яланах малти вырăнта пулма сунчĕ. Педагогика наукисен кандидачĕ, чăвашсен паллă литературовечĕ М. Я. Сироткин юлташ сăмах каланă хыççăн, институт директорĕ Т. Г. Гусев юлташ Октябрьски КПСС райком секретарьне Петров юлташа сăмах пачĕ.

— Пирĕн районта, чăваш ялĕнче, вырăссен XIX-мĕш ĕмĕрти чаплă ученăйĕ Н. Я. Бичурин çуралса ӳснĕ. Ку ялта вăл хăйĕн ачалăхне иртернĕ, сутçанталăка, тăван çĕре юратма вĕреннĕ. Н. Я. Бичурин çак ялта çуралса ӳсни пире питех те савăнтарать. Уншăн эпир çеç те мар, пĕтĕм чăваш халăхĕ мухтанма тивĕç,—терĕ райком секретарĕ.

Вăл Шĕнерпуç колхозникĕсене чаплă ял ятне çӳлерех çĕклеме чĕнчĕ, умра тăракан пысăк ĕçсене яланах вăхăтра, каялла юлмасăр, пысăк пахалăхпа туса пыма сунчĕ.

Сесси каçалапа хупăнчĕ. Шĕнерпуç çыннисемпе сывпуллашса çула тухнă хыççăн эпĕ чылайччен шухăшса кайса пытăм. Çапла çав, Н. Я. Бичурин пурăннă вăхăтранпа пирĕн çĕршыв тĕнче тĕлĕнмелле улшăнчĕ. Çĕршыв çеç мар, çыннисем те урăх халĕ, çĕнĕ çынсем, совет çыннисем. Чăвашсен хăйсен наукăпа тĕпчев институчĕ пур, хăйсен ученăйĕсем, профессорĕсем, писателĕсем—халăх хушшинчен тухнă интеллигенцийĕ пур. Институт колхозра научнăй сесси иртерет. Çакă вăл Октябрь тивлечĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тунă çитĕнӳ пулса тăрать.

В. АЛАГЕР.

„Дружба“ альманахри сăвăсене пăхса тухрĕç

Вырăсла тухса тăракан «Дружба» альманахăн виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кĕнекисене çак кунсенче чăваш совет писателĕсен Союзĕнче пăхса тухрĕç. Альманахра пичетленнĕ сăвăсем çинчен Пĕтĕм Союзри писателĕсен Союзĕн правлени представителĕ, «Нарспи» поэмăна вырăсла куçарнă Мускав поэчĕ Б. С. Иринин доклад туса пачĕ. Вăл çакна палăртрĕ: И. Пиняев, В. Грибанов, Н. Черепанова, В. Яковлев, Н. Александров поэтсем хăйсен сăввисене тăрăшса çырнă. Вĕсен сăввисем тарăн шухăшлă, ăшă кăмăлпа вуланаççĕ, илем енчен те аптрасах каймаççĕ. Анчах çав сăвăсенче те пулсах çитмен вырăнсем пур. Çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăнă май, Б. Иринин тĕрлĕ сыпăксем вуласа пачĕ, сăвăсене тата лайăхрах çырма май пулни çинчен каларĕ.

Пирĕн поэтсем кулленхи пурнăç çинчен çырнă чухне хăйсен кашни йĕркине, кашни сăмахне тишкĕрсех каймаççĕ. Çавна пула сăввăн хăвачĕ йăвашланать, вулакансен чĕрине çĕклентереймест. Çакă вăл чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри.

Альманахăн тăваттăмĕш кĕнекинче В. Чаплинăн «В стенах института» ятлă водевильне пичетленĕ. Канашлăва пуçтарăннă поэтсем çав водевиле пурте тенĕ пекех питĕ начар произведени терĕç. Ăна пичетлеме те кирлĕ пулман.

«Дружба» альманахра пичетленекен çамрăк поэтсем хăйсен пултарулăхне пур енчен те тата ытларах ӳстермелле. Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн вĕсене пур майсемпе те вĕрентсе çитĕнтерсе пымалла.

Утă çулаççĕ

СĔРПӲ. (Телефонпа). Июнĕн 15-мĕшĕнче государство селекци станцийĕнче ĕçлекенсем утă çулма тухрĕç. Утă çулнă çĕрте трактортан кăкарса ямалли 3 сенокосилка ĕçлеççĕ. Халĕ 50 гектар çинче утă çулнă.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозра çырма-çатрасенчи курăксене çулса 50 тонна силос хыврĕç.

Сталин ячĕпе тăракан, «1905 год» колхозсенче те утă çулас ĕç пырать.

Пропагандистсен курсĕ

Июнĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта пропагандистсен уйăхлăх курсĕ ĕçлеме пуçларĕ. Курса 250 пропагандист килнĕ. Курсра КПСС историне, диалектикăлла тата историлле материализма, политикăлла экономие вĕренмелли кружоксене ертсе пыракансемпе партин касхи шкулĕсенчи преподавательсем вĕренеççĕ.

Вĕсем, лекцисем итленисĕр пуçне, хусалăхпа культура строительствинче облаçри парторганизацин задачисем çинчен, пропаганда ĕçне лайăхлатасси çинчен, пропаганда майĕсемпе меслечĕсем çинчен лекцисем итлемелле. Лекцисем вулама хулари наука работникĕсене, аслă шкулсенчи преподавательсене тата КПСС обкомĕн лекторĕсене хутшăнтарнă.

Пирвайхи кунсенче лекцисене КПСС обкомĕн секретарĕсем Н. А. Шмаков тата С. М. Ислюков юлташсем вуласа пачĕç.

Профсоюз организацийĕсен ĕçне куллен ертсе пымалла

Профессилле союзсем пирĕн çĕршыври тĕрлĕ профессипе ĕçлекен рабочисемпе служащисене ирĕклĕн пĕрлештерсе тăракан обществăлла организацисем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне Коммунистсен партийĕ—совет обществин организацилесе тата çул кăтартса пыракан вăйĕ—ертсе пынипе туса пыраççĕ. Пирĕн парти профессиллĕ союзсен ĕçне яланах пысăка хурса хаклать.

Коммунистсен партийĕ профсоюзсен ĕçне куллен ертсе пыни пирĕн çĕршывра профсоюзла юхăма анлăн сарăлса кайма май пачĕ. Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă докладра палăртнă тăрăх, ĕçсыннисене парти тавра пĕтĕçтерес, вĕсене коммунизмла воспитани парас ĕçре совет профсоюзĕсемпе комсомол пек массăлла организацисен пĕлтерĕшĕ нумай ӳсрĕ. КПСС XIX-мĕш съезчĕ профсоюзсен ĕçне малашне те лайăхлатма йышăнчĕ. Парти съезчĕ профсоюзсен ĕçне лайăхлатасси çинчен кăтарту пани пирĕн парти профсоюзсемшĕн тăван атте пек тăрăшнине тата коммунизмла общество тăвас ĕçре вĕсен пĕлтерĕшĕ ӳснине тепĕр хут кăтартса парать.

Халĕ, Коммунистсен партийĕ ĕçсыннисене XIX-мĕш съезд палăртнă историлле программăна пурнăçа кĕртсе пыма мобилизацилене чухне, профсоюзсен пĕлтерĕшĕ вĕçĕмсĕр ӳсрĕ. Партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешесси, рабочисемпе служащисен культурăпа йăлари ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерсе пырасси, массăсене вĕрентсе воспитани парасси—профессиллĕ организацисен тĕп задачисем пулса тăмалла.

Профсоюз организацийĕсене ертсе пырасси — парти организацийĕсен кирлĕрен те кирлĕ ĕçĕ. Вырăнти парти организацийĕсем профсоюзсен ĕçне ертсе пырассине вăйлатма, ĕçре конкретлă пулăшу парса пыма тивĕçлĕ.

Профсоюзсен ĕçне ертсе пырас тĕлĕшпе КПСС Шăхасан, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шупашкар, Чкаловски райкомĕсем тата Канашпа Улатăр хула комитечĕсем тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кунта профессиллĕ организацисен ĕçĕ çинчен час-часах партин райкомĕсемпе хула комитечĕсенче тата пуçламăш организацисенче сӳтсе яваççĕ, профсоюз активĕсен семинарĕсемпе канашлăвĕсене иртерме пулăшаççĕ. Кăçал республикăри пур хуласемпе районсенче те профессиллĕ организацисен руководителĕсен семинарĕсене иртернĕ. Çав семинарсене вырăнти профсоюз организацийĕсенчен пурĕ 1.500 çын хутшăннă. Семинарсенче КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен пайĕсен заведующийĕсем тата секретарĕсем партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ çинчен лекцисем вуласа панă. Çак ĕçсене иртернĕ хыççăн республикăри нумай профсоюз организацийĕсем организаци енчен тĕрекленчĕç, хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Рабочисемпе служащисене государство интересĕсене ытларах хаклама вĕрентсе пырса, профсоюз организацийĕсем кашни предприятире производство планне иртерсе тултарассишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

Республикăри нумай промышленность предприятийĕсенчи рабочисем, социализмла ăмăртса ĕçлесе, 1952 çулхи производство планне чыслăн пурнăçларĕç. Шупашкарти электроаппаратура завочĕ, Куславккари сурт-йĕр тăвакан завод, Çĕмĕрлери «Большевик» завод, Шупашкарти лента тĕртекен фабрика, Атăл леш енчи торфопредприяти, Улатăрти махорка завочĕ тата ыттисем те иртнĕ çулхи производство планне срокчен тултарчĕç, вĕсем продукци пахалăхне лайăхлатнипе пĕрлех, кăçал та производство планне кварталтан кварталах иртерсе тултараççĕ. Сăмахран, Шупашкарти лента тĕртекен фабрика коллективĕ 1952 çулхи производство планне октябрĕн 22-шĕ тĕлне 114,3 процент, кăçалхи 1-мĕш кварталти задание 100,5 процент тултарнĕ.

Çак ӳсĕмсем, паллах, хăй тĕллĕн пулма пултараймян. Фабрикăри пуçламăш парторганизаци профсоюз организацине куллен пулăшать. Çавăнпа та ĕнтĕ профсоюз организацийĕ ĕçре малта пыраканăсен опытне тăтăшах сарать. 1952 çулта фабрикăра пурĕ 3 хутчен стахановецсен конференцине иртернĕ. Кунта производствăра паха тĕслĕх кăтартакансене Хисеп хăми çине тата Хисеп кĕнеки çине кĕртеççĕ, хăйĕн профессийĕпе лайăх ĕçлекен рабочи ятне параççĕ, стахановецсен лайăх опычĕсене тĕпчесе вĕренеççĕ, вĕсене стахановецсен шкулĕсенче сӳтсе яваççĕ. Фабрика комитечĕ социализмла ăмăртăвăн итогĕсене те вăхăтра пăхса тухать. Çакна пула ĕнтĕ фабрикăра стахановецсемпе ударниксен хисепĕ султан сулах ӳссе пырать. Юлашки вăхăтра кăна çамрăк стахановăйсем нумай ӳссе çитĕнчĕç.

Рабочисемпе служащисем хушшинче социализмла ăмăртăва сарса пырас тĕлĕшпе республикăри ытти предприятисенче те чылай ĕçсем туса иртернĕ.

Профсоюз организацийĕсен ăмăртăвăн витĕмлĕхне ӳстерес тесе, кашни рабочи конкретлă обязательствăсем илме тата вĕсене чыслăн пурнăçлама пулăшмалла. Рабочисемпе служащисен ĕç квалификацине ӳстересси çине уйрăмах тимлĕн пăхни кирлĕ. Анчах та Канашри вагонсем юсакан заводри, Шупашкар промкомбинатĕнчи, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи, Шупашкарти аш-какай комбинатĕнчи профсоюзпа хуçалăх руководителĕсем социализмла ăмăртăва ертсе пырассине лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Рабочисемпе служащисем хушшинче социализмла ăмăртăва сарас ĕçе ячĕшĕн анчах туса пыраççĕ, производствăра малта пыракансен опычĕсене çителĕклĕ сармаççĕ, продукци пахалăхĕшĕн кĕрешессине хакламаççĕ, ĕçе хисеп тăрăх анчах шутлаççĕ.

Профсоюзсен облаçри совечĕпе обкомĕсем вырăнти профсоюз организацийĕсене çителĕклĕ пулăшса пымаççĕ, вĕсене лайăх ĕçлекен организацисем пек ĕçлеме вĕрентмеççĕ.

Рабочисемпе служащисен культурăпа йăлари ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерсе пырассишĕн тăрăшасси — профсоюз организацийĕсен чи малтанхи тивĕçĕ пулса тăрать. Вĕсем пирĕн партие ĕçсыннисен материальнăй пурнăçĕпе культурине ӳстерес ĕçре пур енчен те пулăшса пымалла. Партин XIX-мĕш съездĕнче Г. М Маленков юлташ çапла каларĕ: «Эпир совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатас тата культурине ӳстерес ĕçре пысăк çитĕнӳсем турăмăр. Анчах эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр. Пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: пĕтĕм халăх хуçалăхĕ аталанса пынă никĕс çинче совет çыннисен материальнăй пурнăçĕпе культура шайне пĕрмаях малалла ӳстерсе пымалла. Пирĕн парти малашне те совет çыннисен пĕрмаях ӳссе пыракан ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерес тесе ырми-канми тăрăшĕ, мĕншĕн тесен совет çыннин пурнăçне лайăхлатса пырасси, совет халăхне пур енĕпе те ӳстерсе аталантарасси пирĕн партишĕн тĕп закон пулса тăрать».

Профсоюз организацийĕсен хуçалăх организацийĕсем умне пурăнмалли çуртсем тата культурăпа обществăлла çуртсем тăвас тĕлĕшпе пысăк требованисем лартмалла, культурăпа йăла учрежденийĕсен, суту-илӳпе обществăлла апатлану предприятийĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тămалла.

Социализмран коммунизма майĕпен куçса пынă тапхăрта идеологилле ĕçĕн пĕлтерĕшĕ нихçанхинчен те ытларах ӳсет. Парти организацийĕсем ертсе пынипе, пирĕн республикăри профсоюзсем халăх массисене политикăлла воспитани парас, вĕсен культурăлла шайне хăпартас тĕлĕшпе нумай ĕç туса пыраççĕ. Юлашки вăхăтра профсоюзсен клубĕсем, хĕрлĕ кĕтессем, библиотекăсем палăрмаллах нумайланчĕç.

Апла пулин те, профсоюз организацийĕсен халăха коммунизмла воспитани парас ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ «Партин Шупашкар хула комитечĕ профсоюз организацийĕсене ертсе пыни çинчен» йышăннă решенире çапла палăртрĕ: «Хулари хăшпĕр профсоюз организацийĕсенче профсоюз членĕсем хушшинчи культурăлла-массăлла тата политикăлла воспитани ĕçне начар туса пыраççĕ. Нумай клубсемпе хĕрлĕ кĕтессем япăх ĕçлеççĕ, хăйсен ĕçĕсене предприяти коллективĕ умĕнче тăракан конкретлă задачăсемпе çыхăнтармаççĕ».

Профсоюзсен хăйсен мĕнпур культурăлла-массăлла ĕçне ĕçсыннисене обществăлла тивĕçе тарăнăн ăнланса ĕçлеме, государство интересĕсене ытларах хаклама, хамăр çĕршыва чĕрорен юратма, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме воспитани парас тĕллевпе туса пымалла. Умра тăракан хисеплĕ задачăсене тивĕçлипе пурнăçлас тесен — профсоюз организацийĕсен организацилле-массăлла ĕçĕн шайне ӳстермелле. Анчах та хăшпĕр профсоюз организацийĕсем çак ĕçе хакламаççĕ-ха.

Шупашкарти аш-какай комбинатĕнче (вырăнти комитет председателĕ Пташков юлташ) рабочисен 34 процентĕ профсоюзра тăмасть, мĕншĕн тесен вырăнти комитет вĕсене профсоюза илме хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлет. Кунта рабочисем хушшинче ăнлантарулла ĕçе ячĕшĕн кăна туса пыраççĕ.

Профсоюз пухăвĕсем — профсоюз демократин кирлĕ формисенчен пĕри. Анчах та республикăра хăшпĕр профсоюз организацийĕсем, уйрăмах Шупашкар хулинчи профсоюз организацийĕсем, пухусен пĕлтерĕшне хакламаççĕ. Рабочисемпе служащисем хушшинче аялтан килекен критика çителĕксĕр пусăмра тăрать. Кирпĕч заводĕнчи, Шупашкарти суту-илӳ организацийĕсенчи, «Родина» кинотеатрти тата ытти хăшпĕр çĕрти профсоюз организацийĕсенче пухусене начар хатĕрленсе иртереççĕ.

Çакă вăл хăшпĕр профсоюз работникĕсем активпа çыхăнса тата ун çине таянса ĕçлеменни, унтан вĕренсе пыманни, критикăна аталантарассишĕн тăрăшманни çинчен калать. Профсоюзсен хăшпĕр обкомĕсем штатра тăман инструкторсемпе ытла та сахал ĕçлеççĕ, вĕсене ĕçе вĕрентме тăрăшмаççĕ.

Парти организацийĕсен профсоюз ĕçне лайăхлатса пырассишĕн куллен тăрăшмалла. Вĕсен профсоюз организацийĕсене ĕçри тĕп ыйтусем тăрăх кăтартусем памалла, профсоюз кадрĕсене тĕрĕс суйласа илсе, вĕрентсе пымалла, парти решенийĕсене пурнăçлас ĕç мĕнле пынипе тăтăшах интересленмелле. Партин хăшпĕр районти тата хулари комитечĕсем профсоюз ĕçне конкретлă ертсе пымаççĕ-ха. Вĕсем профсоюз руководителĕсене пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарас ĕçе йĕркелемеççĕ, профсоюз активĕпе семинарсем иртермеççĕ. Сăмахран, КПСС Шупашкар, Улатăр, Элĕк, Комсомольски, Кувакино, Советски райкомĕсем профсоюз организацийĕсен ĕçне лайăхлатасси çинчен юлашки вăхăтра пĕр ыйту та хускатман.

Парти организацийĕсен профсоюз организацийĕсене партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешес ĕçре, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва малалла сарса пырас ĕçре куллен ертсе пымалла.

Н. ПЛАТОНОВ,

КПСС обкомĕн профсоюз тата комсомол органĕсен секторĕн заведующийĕ.

Кашни киле—хаçат-журнал!

Обществăлла уполномоченнăйсене ертсе пырас пулать

Кăçалхи иккĕмĕш çурçулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕçе эпир майăн 25-мĕшĕнче тытăнтăмăр. Тавăтри çыхăну уйрăмĕнчи письмоносецсем илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Кунта хаçат-журнал сарас ĕçе обществăлла уполномоченнăйсем те активлă хутшăнаççĕ.

Çав вăхăтрах Чăваш Сурăмĕне Вырăс Сурăмĕнчи çыхăну уйрăмĕсем хаçат-журнал сарас енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ялсенчи партипе совет тата комсомол активне çак ĕçе тивĕçлипе хутшăнтарман. «Сталинград» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Иванюк юлташ ку таранччен пĕр хаçат та çырăнса илмен. Тени çыхăну уйрăмĕнче активистсем 52 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен пĕри те хаçат-журнал çырăнса илмест.

Вăрманкассинчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Моткин юлташ иккĕмĕш çул ĕнтĕ пĕр хаçат-журнал та çырăнса илмест.

Пирĕн районта хаçат-журнал сарас енĕпе ĕçлеме уйăрнă обществăлла уполномоченнăйсем 60 çын шутланаççĕ. Вĕсене тивĕçлипе ертсе пырсан, хаçат-журнал сарас ĕç лайăхланма пултарать. Анчах та КПСС райкомĕ пулăшман пирки вĕсемпе иккĕмĕш çул ĕнтĕ пĕр канашлу та ирттерейместпĕр. КПСС райкомĕ пире çак ĕçре кирлĕ пек пулăшĕ тесе шанатпăр.

С. ИГНАТЬЕВА,
«Союзпечетĕн» Элĕк районĕнчи организаторĕ.

Лайăх ĕçленĕшĕн—преми

ШĂХАСАН. Ирина Яковлева Сталин ячĕпе тăракан колхозра 7 çул ĕнтĕ письмоносец пулса ĕçлет. Вăл хаçат-журналсемпе çырусене ĕçсыннисене яланах вăхăтра çитерсе парать.

Яковлева тăрăшнипе Сталин ячĕпе тăракан колхозра кашни киле пĕрер экземпляр хаçат-журнал килсе тăрать. Колхоза Мускавра тата Шупашкарта тухса тăракан хаçатсемпе журналсем 250 экземпляр килеççĕ.

Хăйĕн ĕçне лайăх туса пынăшăн Яковлева юлташа 200 тенкĕ преми пачĕç.

Х. ГОРДЕЕВ.

Çĕртме уйĕсем таса

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. МТС-ăн М. Падюков юлташ ертсе пыракан 3-мĕш трактор бригади ирхи çĕртме тумалли плана çулсеренех агротехника кăтартнă срокра тултарса пырать. Бригада кăçал та ку тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. МТС-па договор тунă колхозсенче 350 гектар ирхи çĕртме туса, плана ирттерсе тултарнă.

Çĕртме сухинче Е. Блиновăпа П. Дементьев трактористсем «ДТ-54» тракторпа сменăра 9—10-шар гектар, И. Падюковпа А. Степанов юлташсем НАТИ тракторпа 9-шар гектар сухаласа паха тĕслĕхсем кăтартрĕç, ытти трактористсене те хăйсем пек ĕçлеме хавхалантарса пычĕç.

— Пирĕн бригадăри трактористсем «Свет», «Профинтерн» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсене ситес çулхи тухăçлă тырпул никĕсне хывса хăварма чăннипех пулăшрĕç, ирхи çĕртме сухине вăхăтра туса хăвартăмăр,—тет трактор бригадин бригадирĕ М. Падюков юлташ.

Халĕ бригадăри трактористсем договор тунă колхозсен çĕртме уйĕсене таса тытас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

В. ЧОБАЙКИН.

Хамăр республикăра

Канашри вокзалта

Кăнтăрла та, çĕрле те вокзалта халăх йышлă. Тăван çĕршывăн тĕрлĕ хулисенчен килнĕ çынсем пулаççĕ кунта.

Вокзалта кăнтăр енчен килекене, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчен таврăнакана, çурçĕрелле каякана та куратăн.

...Свердловскран Мускава каякан поезд станцие çитсе чарăнчĕ. Ăна чугун çул çинче 31 çул ĕçлекен дежурнăй Николай Ананьев юлташ кĕтсе илчĕ. Вагонсенчен аннă çынсем перрон çине тухрĕç, чылайăшĕ вокзала кĕрсе вырнаçрĕç.

Вокзал çумĕнчи почта уйрăмĕнче хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Посылкăсемпе çырусене, хаçатсемпе журналсене пушатаççĕ, Чăваш республикинчен илсе каякannисене тиесе ăсатаççĕ.

Пассажирсен багажĕсене хумалли камерăра С. Бурмистрова кладовщица ĕçлет. Вăл багажсене вăхăтра йышăнать, пассажирсемпе кăмăллăн та ăшшăн калаçать.

Вокзалта ачасемпе ача амăшĕсене йышăнмалли уйрăм пӳлĕм пур. Пӳлĕмре таса та илемлĕ. Стена çинчи картинăсем, шап-шурă вырăнсем, çемçе дивансем куça илĕртеççĕ. Пӳлĕмре эпир пулнă кун офицер арăмĕ Домолязова, Уралмашзаводра ĕçлекен Хлюникова, Мускав врачĕ Кулиева, Шупашкарти работница Чекрычина, Тюмень хулинчи учительница Тимофеева, Магнитогорскинчи инженер Капитонова, Сахалинри работница Ермолова тата ыттисем те хăйсен ачисемпе пĕрле канатчĕç.

Вокзалта телефон, телеграф, медицина пункчĕ пур.

Чугун çул работникĕсен клубĕ яланах уçă. Унта кино тăтăшах кăтартаççĕ, лекцисем вулаççĕ. Çĕнĕ вокзал çуртне туса пĕтерсен пассажирсем валли тата лайăхрах условисем пулаççĕ.

Мĕн чухлĕ ĕç вокзал начальникĕн Анна Осина юлташăн! Тĕрлĕ ыйтупа кĕреççĕ ун патне пассажирсем тата вокзалта ĕçлекенсем. Пурне те вăл ăшшăн йышăнать, пуринпе те чĕререн калаçать.

Пĕрремĕш кварталта лайăх ĕçленĕшĕн вокзал коллективĕ Хусан чугун çул управленийĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Хĕрлĕ ялава малашне те хăйсен аллинче тытса тăрассишĕн вокзалта ĕçлекенсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

П. КОЛЬЦОВ.

Пĕр шкулăн воспитанникĕсем

КУСЛАВККА. Кунти 1-мĕш вăтам шкултан пĕлтĕр 21 çамрăк вĕренсе тухнă, вĕсенчен улттăшĕ медальсем илнĕ. Ылтăн медаль илнĕ Эльвира Эсливанова Мускаври электроэнергетика институтĕнче вĕренет. Евгений Севрюгинпа Алексей Мартынов медалистсем — Ленинградри шыв çул транспорчĕн инженерĕсене хатĕрлекен институт студенчĕсем. Вĕсемпе пĕрле вăтам шкул пĕтернĕ ытти çамрăксем те аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

Çитĕнсе çитнисен аттестатне илме кăçал кунта 33 ача экзамен тытать. Халиччен çичĕ экзамен тытнă, начар паллă илни пĕрре те çук. Чылай ачасен пĕлĕвĕсене лайăх паллăсемпе хакланă.

(Хамăр инф.).

ГОСУДАРСТВĂНА — ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ПРОДУКЧĔСЕМ

ÇĔРПӲ. Районти чылай колхозниксем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлаççĕ. Çак кунсенче «Глиссер» колхоз государствăна 1953 çулшăн сĕт парса татрĕ. Ку колхозри колхозниксем те сĕт памалли хăйсен обязательствисене 40 процента яхăн пурнăçланă.

С. ШАДИН.

Вăрмарти чул кăларакан карьерта чылай ĕçе механизациленĕ.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: вак чула экскаваторпа автомашина çине тиеççĕ.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Кĕнеке—колхозниксен тусĕ

СĔНТĔР. Пĕрлешсе пысăкланнă Свердлов ячĕпе тăракан колхоз 1953 çулшăн нумай тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илнĕ. Иртнĕ çулта правлени çумĕнче «Колхозник библиотеки» уçрĕç. Унта халĕ 400 яхăн тĕрлĕ кĕнеке пур. Колхоз счетоводĕ В. Мамутин «Колхозник библиотекин» заведующийĕ пулса пысăк ĕç тăвать. Кĕнеке илме пынă колхозниксене канашсем парать, кирлĕ кĕнекесем суйласа илме пулăшать.

Колхозлă ялта халĕ икĕ библиотека. Вулав çуртĕ çумĕнчи библиотекăра та чаплă кĕнекесем нумай. Вулакансен йышĕ халĕ 200 çынна çитнĕ. Вĕсем хушшинче бригадирсемпе ферма заведующийĕсем тата 60—70 çулхи ватăсем те пур. Акă сăмахран, колхоз столярĕ 63 çулхи Я. Филиппов кăçал кăна 16 кĕнеке вуласа тухрĕ.

— Ĕлĕкрех эпĕ кĕнеке хакне ăнланса илеймен, тен çавăнпах-и, вулама та йăвăрччĕ. Халĕ ĕнтĕ кĕнеке маншăн чи çывăх тус пулса тăчĕ, унсăр эпĕ пĕр кун та пурăнаймастăп,—тет Я. Филиппов юлташ. Кăçал вăл парти историйĕн кĕске курсне тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă историлле произведенине вуласа тухрĕ.

67 çулхи Т. Моляров, 58 çулхи П. Ишалеева юлташсем те совет писателĕсемпе вырăс классикĕсен произведенийĕсене юратса вулаççĕ.

Чылай вулакансен килĕсенче халĕ хăйсен библиотекисем пур. Сăмахран, çамрăк колхозник А. Ишалеевăн килĕнчи библиотекинче 300 кĕнеке. Вĕсем хушшинче Ленин—Сталин сочиненийĕсен томĕсем, Мичурин, Докучаев, Вильямс, Лысенко вĕрентĕвĕсем çинчен çырнă кĕнекесем пур. А. Ишалеев юлташ кĕнекесене типтерлĕ тытса усрать, çулсеренех 40—50 çĕнĕ кĕнеке туянать. Хăйĕн библиотекинчи кĕнекесене вăл кӳршĕсене те вулама парать.

М. Трофимов колхозник пахча çимĕç ĕçĕсемпе интересленет. Çавăнпах ĕнтĕ унăн килти библиотекинче «Овощеводство», «Сад и огород», «Выращивание арбузов и дынь», «Морковь» тата ытти çавăн пек кĕнеке-журналсене курма пулать. Трофимов юлташ пахча çимĕçсемпе тĕрлĕ опытсем тăвать. Халĕ вăл арбузпа дыньăна тĕрлĕ майсемпе çитĕнтерме опытсем тума хатĕрленет.

А. Голубев колхозник хурт-хăмăр тата сад ĕрчетес ĕçсемпе интересленет. Хăйĕн интересне кура вăл кашни уйăхрах çĕнĕ кĕнекесем туянать. Халĕ унăн килти библиотекинче 200 кĕнеке ытла. М. Шашков бригадирăн, А. Степанов ферма заведующийĕн тата Д. Самсонов, В. Атласкин, В. Матвеев колхозниксен те хăйсен пĕчĕк библиотекисем пур.

Кĕнеке чăннипех те колхозникăн чи çывăх тусĕ пулса тăчĕ. Çакна шута илсе ялти вулав çурчĕ те хăйĕн ĕçне вăйлатрĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ пуçарнипе ялта книгоношăсен ĕçне чĕртсе ячĕç.

Колхозниксем ыйтакан кĕнеке библиотекăра çук пулсан, çав кĕнекене кӳршĕ ялти библиотекăсенчен илсе килеççĕ. Колхозра кашни бригадăрах тата фермăсенче те куçса çӳрекен библиотекăсем уçнă. Ялти обществăлла çуртсенче тĕрлĕ темăсем тăрăх кĕнеке витринисем тунă.

Нумаях пулмасть кунта партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене пухăнса вуласа тухрĕç тата «Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн ĕçри опычĕ» ятлă кĕнеке тăрăх калаçу ирттерчĕç.

Г. СЕРГЕЕВ.

Ертсе пыракан работниксен семинарĕ

КПСС Çĕмĕрле райкомĕ ертсе пыракан кадрсен экономикăлла пĕлĕвне ӳстерме ялан ĕçлекен семинар организациленĕ. Семинар занятийĕсене промышленность, транспорт, çыхăну предприятийĕсен руководителĕсем, цехсен начальникĕсем, главнăй бухгалтерсем, плановиксем—пурĕ 82 çын çӳреççĕ.

Семинарта И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ тăрăх тата партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем тăрăх лекцисем вулаççĕ. Лекцисем вулама КПСС райкомĕн секретарĕсене, районти прокурора Егоров юлташа, сĕтел-пукан комбиначĕн директорне Хрипушин юлташа, йывăç япаласем тăвакан завод директорне Русин юлташа, Баторшин, Куленко, Шустов инженерсене т. ыт. те хутшăнтараççĕ.

Занятисем уйăхра икĕ хут, тăватшар сехет пулаççĕ. Çулталăк хушшинче лекцисемпе семинар занятийĕсем пурĕ 64 сехет пулмалла.

Районти хаçатсенчен

ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРЧĔÇ

«Герой» колхоз членĕсем кăçалхи çул-йĕр строительстви планне срокчен пурнăçлас тесе, ĕçе массăллăн хутшăнчĕç.

Колхозăн планпа 210 кубометр хăйăр турттармалла, 880 кубометр çĕр ĕçĕ тумалла пулсан, колхозниксем 250 кубометр хăйăр турттарса тата 920 кубометр çĕр чавса плана ирттерсе тултарчĕç.

«Вăйлă тырпулшăн».

Шăхасан.

ДЕПУТАТПА ТĔЛ ПУЛЧĔÇ

Июнĕн 9-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет депутачĕ П. И. Куприянова юлташ, Первомайскипе Йĕпреç хушшинчи çул çинче ĕçлекенсем патĕнче пулса, вĕсене СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă решенисем çинчен доклад туса пачĕ. Доклада 453 çын итлерĕ.

Çул çинче ĕçлекенсем çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарма сăмах пачĕç.

«Коммунар».

Первомайски.

ЮРĂ ПРАÇНИКĔ УМĔН

Улатăрти чугун çул работникĕсен В. И. Ленин ячĕпе тăракан клубĕ çумĕнчи хор коллективĕ юрă праçникĕнче юрламалли юрăсене лайăх вĕренсе çитрĕ. Вĕсем уйрăмах пĕрлешнĕ хор юрламалли юрăсене тăрăшса вĕренчĕç. Клубри уйрăм солистсем те праçнике тăрăшса хатĕрленеççĕ. Самокова юлташ праçникре Туликовăн «Курский соловей», Варламовăн «Что мне жить и тужить» юрăсене юрласа парать.

Хор коллективĕнче халĕ 60 çын тăрать.

«Ленинский путь».

Плана тултарнă

КӲКЕÇ. Кадыков ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çул-йĕр строительствине пысăк сĕкленӳпе хутшăнчĕç. Задание срокчен пурнăçлассишĕн, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн бригадăсем, колхозниксем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Вуншар колхозниксем ĕç нормине куллен ăнăçлă тултарса пычĕç.

Колхоз çĕр чавса купаламалли çулталăкри плана 122 процент, хăйăр турттармалли плана 112 процент, чул турттармалли плана 106 процент тултарчĕ. Чул сарса çĕнĕ çул тумалли тата киввисене юсамалли задание те колхоз срокчен пурнăçларĕ.

П. НИКИФОРОВ,
колхоз бригадирĕ.

* * *

КӲКЕÇ. «Правда» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри хушшинчи çула юсаççĕ. Бригадăра пурĕ 40 çын. Ăна П. Игнатьев коммунист ертсе пырать. Çул çинче ĕçлекенсем валли колхоз правленийĕ пĕрлешӳллĕ столовăй йĕркеленĕ, ĕç хыççăн канма условисем туса панă. Кану вăхăтĕнче колхозниксем çĕнĕ хаçат-журналсем вулаççĕ, кино кураççĕ.

Çул çине тăпра йăтнă çĕрте А. Семенова, Т. Иванова, Л. Иванова, Р. Александрова, Р. Ильина комсомолкăсем кулленхи нормăна 120—130 процент тултарса пыраççĕ.

Çул-йĕр бригади членĕсем, çул çинче ĕçленипе пĕрлех, ял çывăхĕнчи çырмара чул кăлараççĕ, Шанкал шывĕ урлă кĕпер хываççĕ.

И. Ефимов, Е. Михайлов, И. Смирнов, В. Столяров колхозниксем çак ĕçсене тунă çĕрте паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

Тракторсем ĕçлемесĕр тăраççĕ

Етĕрне районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз. Уй хапхи умĕнче ларакан трактор патĕнче И. Макаров тĕрмешет.

— Мĕн пулнă вара тракторна?—ыйтрăмăр трактористран.

— Пăсăлчĕ те вунă кун ытла аппаланатăп ĕнтĕ,—тет тракторист.

— Миçе гектар ирхи çĕртме сухаланă ку тракторпа?

— Калама та намăс,—тет И. Макаров.—Пĕр гектар та сухаламан-ха.

— Çуракинче ĕçлемелли плана тултаркаларăр-и?

— Трактор час-часах çĕмĕрĕлнипе пула çуррине яхăн тултаркаларăм...

Çак колхозра ĕçлекен ытти тракторсем те час-часах çĕмĕрĕлсе, ĕçлемесĕр лараççĕ. М. Красновпа Г. Дмитриев трактористсем çуракин малтанхи кунĕсенче 6,5 гектар сухаланă та, трактор çĕмĕрĕлнĕ хыççăн МТС мастерскойне илсе кайнă. Вăл трактор халĕ те унтах тăрать.

— Намăс курса пĕтрĕмĕр,—тет колхоз председателĕ Ф. Кондратьев юлташ,— Çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçсене трактор бригади çуррине те тăваймарĕ. Планпа 150 гектар ирхи çĕртме сухи тумалла пулсан, паянхи куна 75 гектар кăна сухаланă. Тракторсем çĕмĕрĕлни МТС руководителĕсене нимĕн пулманпа пĕрех. Вĕсем бригадăсенче сахал пулаççĕ. Çĕмĕрĕлнĕ тракторсене вăхăтра юсама тăрăшмаççĕ.

Питĕ тĕрĕс калать колхоз председателĕ. Çак колхозра ĕçлеме А. Кузнецов юлташ бригадир пулса ĕçлекен трактор бригадине çирĕплетнĕ. А. Кузнецов юлташ Мичурин ячĕпе тăракан колхозра ĕçлекен трактористсем патĕнче сайра хутра çеç пулать, çĕмĕрĕлнĕ тракторсене юсама пулăшмасть. Вăл Жданов ячĕпе тăракан колхозра ĕçлекен трактористсем патĕнче, кил çывăхĕнче ытларах пурăнать. Кунта та ĕçсем савăнмаллах мар. Çураки планне 60 процент ытларах кăна тултарнă, çĕртме сухине тума тытăнманпа пĕрех. Кунта икĕ трактор эрне ытла ĕçлемесĕр лараççĕ. Урапаллă тракторăн радиаторĕ çук, дизеллĕ трактора юсама пуçлани эрне иртнĕ.

Çак бригадăри тĕслĕхсенех ытти хăшпĕр бригадăсенче те курма пулать. Ленин ячĕпе тăракан, «1-ое Мая» колхозсенче ĕçлеме Александров юлташ бригадине çирĕплетнĕ. Бригада çураки ĕçĕсен планне мĕн пурĕ те 40 процент ытларах кăна тултарнă. Ирхи çĕртме сухи тумалли плана та тултарман. «1-ое Мая» колхозри ларакан СТЗ-НАТИ трактор çуркуннерен пех çĕмрĕк тăрать.

Мĕншĕн-ха тракторсем ĕçлемесĕр тăраççĕ? Тĕп сăлтавĕ хĕллехи вăхăтра япăх юсани, уй-хирте тракторсене вăхăтра юсаса ĕçе яма тăрăшманни пулать. МТС руководителĕсем машинăсем çĕмĕрĕлнине шута илсе кăна лараççĕ. Çĕмĕрĕлнĕ машинăсем патне тепĕр чухне пырса пăхкалаççĕ, механиксем яма пулаççĕ те, çакăнпа вĕсен ĕçĕ вĕçленнĕ шутланать.

Трактористсем хушшинче массăлла ĕçе питĕ япăх туса пыраççĕ. Мичурин ячĕпе, Жданов ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлекен трактор бригадисенче çураки пуçланнăранпа та трактористсемпе пĕр калаçу та ирттермен, хаçатсем вуласа памаççĕ, малта пыракансен опытне сарса пымаççĕ, социализмла ăмăрту организацилемен.

МТС-ра лайăх ĕçлекен трактористсем çук мар. А. Абрамов юлташ ертсе пыракан бригада çуракинче тумалли ĕçсен планне те, ирхи çĕртме сухи тумалли плана та вăхăтра тултарчĕ. Çак бригадăри И. Степановпа М. Тонарев трактористсем кулленхи нормăна 120—130 процент тултарса ĕçлеççĕ. И. Степанов тракторист ĕçлекен СХТЗ трактор çураки пуçланнăранпа пĕр чарăнмасăр ĕçлет. Вăл «Большевик» колхозра ĕçлесе çуракинче тумалли ĕçсен планне ирттерсе тултарнă. Ирхи çĕртме сухи тумалли плана та 200 процент тултарнă. Абрамов юлташ бригади «Большевик» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче ирхи çĕртме сухи тумалли плана тултарчĕ. Анчах çак бригадăри трактористсен паха опытне ытти трактористсем хушшине сармаççĕ.

Етĕрне райсовет исполкомĕпе КПСС райкомĕ те машина-трактор станцин ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тумаççĕ-ха. Хĕллехи вăхăтра, тракторсене çулла ĕçлеме хатĕрлемелли тапхăрта, райкомпа райсовет исполкомĕ МТС тракторсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсас ĕçе мĕнле туса пынипе сахал интересленчĕç. Халĕ те вĕсем МТС руководителĕсем ĕçе сăмахпа «лайăхлатма» тăрăшнипе килĕшсе пурăнаççĕ. МТС Совечĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ ларăвĕнче, колхоз председателĕсем тракторсем начар ĕçлени çинчен каланине ответлесе, МТС директорĕ Вязов юлташ ĕçе лайăхлатасси çинчен лайăх сăмахсем чылай каларĕ. Анчах унăн сăмахĕсем ĕçпе çыхăнмаççĕ. Тракторсем ĕçлемесĕр лараççĕ. Район çĕртме тăвас тĕлĕшпе юлса пырать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Сессисене хатĕрлесе ирттересси çинчен

Вырăнти Советсен организацилле-массăлла ĕçĕнче сессисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Сессисенче Советсем хуçалăхпа культура строительстви енĕпе тăракан задачăсене сӳтсе яваççĕ, вĕсене пурнăçлама паха решенисем йышăнаççĕ.

Сессисене Советсен исполнительнăй комитечĕсем пухаççĕ. Чăваш АССР Конституцийĕ кăтартнă тăрăх, район Совечĕсен сессийĕсене çулталăкра ултă хут, ял Совечĕсен сессийĕсене кашни уйăхра пĕр хут ирттермелле.

Сесси Советăн организацилле ĕçĕнче тĕп форма пулса тăрать. Сессисене йĕркеллĕ ирттересси, вĕсен кун йĕркинче тăракан ыйтусене тĕплĕн сӳтсе явса, тивĕçлĕ решени йышăнасси — Советсен кулленхи тивĕçĕ.

Юлашки вăхăтра республикăри район, хула, поселок, ял Совечĕсем хăйсен сессийĕсене ирттерессине пăртак лайăхлатрĕç. Шупашкар районĕнчи Апаш, Чăкăр, Шоркка ял Совечĕсем, Ишлей районĕнчи Чаканар, Мамка, Кипечкасси ял Совечĕсем, Муркаш районĕнчи Кашмаш, Орнино, Шурча ял Совечĕсем кăçал кашни уйăхрах пĕрер сесси ирттереççĕ.

Сессисене хатĕрленес ĕçе нумай исполкомсем депутатсене, яланхи комиссисене, совет активне анлă хутшăнтараççĕ. Вĕсем сесси кун йĕркинче тăракан ыйтусене тĕплĕн пăхса тухаççĕ. Исполнительнăй комитетсем сессире сӳтсе явма лартнă ыйтусем тăрăх содокладсем хатĕрлеме яланхи комиссисене пулăшаççĕ. Исполкомсем Советăн черетлĕ сессине пухасси çинчен депутатсене чылай малтан пĕлтереççĕ. Çавăн пекех вĕсене кун йĕркинче тăракан ыйтусемпе тĕплĕн паллаштараççĕ. Район, хула Совет исполкомĕсем сесси пухасси çинчен пичетре те пĕлтереççĕ. Унта сесси хăçан, ăçта пуласси кăтартаççĕ. Çапла вара, суйлавçăсем те сесси хăçан пуласси çинчен пĕлсе тăраççĕ.

Сессисене хатĕрленсе ирттерес енĕпе уйрăмах Çĕрпӳ хула Совечĕн исполкомĕ чылай ĕçсем туса ирттерет. Кунта сесси пухасси çинчен кашни депутатах пĕлтерӳ ярса параççĕ, унта сессире мĕнле ыйту сӳтсе явма палăртнине те кăтартаççĕ. Çавăн пекех пĕлтерӳре докладчиксемпе содокладчиксен хушаматне, сесси хăçан, ăçта пулассине кăтартаççĕ.

Хула Совечĕн сессийĕнче чылай чухне пĕр-икĕ ыйту лартаççĕ. Яланхи комиссисем, депутатсем çак ыйтусем тăрăх ĕçсем мĕнле пулса пынине вырăна кайса тĕрĕслеççĕ. Март уйăхĕнче пулса иртнĕ сессире хулара благоустройство енĕпе тумалли ĕçсем çинчен сӳтсе явнă. Çак ыйтăва хатĕрлеме яланхи комисси активлăн хутшăннă. Комисси председателĕ В. Петров юлташ сессире содоклад тунă, благоустройство ĕçне лайăхлатма паха сĕнӳсем панă. Решени йышăннă чухне çак сĕнӳсене шута илнĕ. Хула Совечĕн решенийĕсене исполком тивĕçлĕ организацисемпе предприятисене, яланхи комиссисене тата депутатсене вăхăтра ярса парать.

Сĕнтĕрвăрри хула Совет исполкомĕ сессире пăхса тухма палăртнă ыйтусене хатĕрлеме яланхи комиссисемпе депутатсене хутшăнтарать. Сăмахран, кăçалхи апрелĕн 15-мĕшĕнче «Хулари суту-илӳ предприятийĕсен ĕçне лайăхлатасси çинчен» сӳтсе явнă. Сесси пухăниччен суту-илӳ енĕпе ĕçлекен яланхи комисси потребительсен хулари обществи, магазинсен тата столовăйсен ĕçне тĕрĕсленĕ. Вăл суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнче нумай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Иккĕмĕш номерлĕ магазин заведующийĕ Иванов юсавлă мар тарасасемпе усă курнă. Иккĕмĕш номерлĕ столовăйра санитари йĕркисене тытса пыман, апат çиме пыракансене вăхăтра çитермен. Яланхи комисси тĕрĕслӳ материалĕсем тăрăх сессире содоклад туса панă. Ĕçсем вырăнта мĕнле пулса пынине пĕлнĕ май, сессире сӳтсе явакан ыйту тăрăх депутатсем активлăн тухса калаçнă. Пренире критика анлă сарăлнă, суту-илӳ работникĕсенчен хăшпĕрисем ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç çине чунсăррăн пăхнине палăртнă. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕ суту-илӳ организацийĕсен ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ решени йышăннă.

Анчах, калас пулать, сессисем ирттересси пур çĕрте те кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта Советски районĕнчи Мăн Ямаш, Шĕмшеш, Чемей, Кивĕ Тинкеш, Советски, Мăн-Явăш, Килтĕш, Мăн Чураш, Мăн Пакăш, Асламас ял Совечĕсенче, Вăрмар районĕнчи Энтрияль, Пăвакасси, Вăтакас, Çĕнĕ Вĕренер, Аслă Пинер тата Кивĕ Вĕренер ял Совечĕсем пĕрер сесси кăна ирттернĕ. Комсомольски районĕнчи Урмаел, Чĕчкен, Хырхĕрри ял Совечĕсем икĕ уйăхра пĕр сесси те ирттермен.

Сĕнтĕр район Совечĕн исполкомĕ те ял Совечĕсем сессисене ирттерес тĕлĕшпе йĕркене пăени çине сӳрĕккĕн пăхать. Кăçал сессисем ирттересси мĕнле пулса пыни çинчен исполком ларăвĕнче пăхса тухман, пĕр ял Совечĕн ĕçне те тĕрĕслемен. Апрель уйăхĕнче Ахмане ял Совечĕн ĕçĕ пирки исполкомра ыйту лартнă пулнă, анчах решенире сесси ирттересси çинчен пĕр сăмах та каламан. Çак ял Совечĕ Чăваш АССР Конституцийĕн 57-мĕш статьине пурнăçламасть. Сессисем ирттерес ĕç çине тимсĕр пăхнине пула, иртнĕ тăватă уйăх хушшинче районти икĕ ял Совечĕ кăна (Мăн Хураçка тата Тепте ял Совечĕсем) сессисене Конституцире кăтартнă срoксенче ирттернĕ. Калайкасси, Пушкăрт, Хачăк, Янăм ял Совечĕсем тăватă сесси вырăнне икшер çеç ирттернĕ.

Вырăнти Советсен ĕçне лайăх йĕркелесси критикăпа самокритикăна анлă сарнинчен нумай килет. Советсене тĕреклетсе çирĕплетес ĕçре критикăпа самокритика хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Партин XIX-мĕш съездĕнче Маленков юлташ çапла каланă: «Критикăпа самокритика парти аллинче партин сывлăхлă организмне хавшатакан çитменлĕхсене, йăнăшсене, пăсăк явленисене хирĕç кĕрешмелли тĕрĕсленĕ хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Критикăпа самокритика Совет государствине, советлă общество стройне вăйсăрлатмаççĕ, ăна тĕреклетеççĕ, вăл унăн вăйĕпе пурнăçлăхне кăтартса паракан тĕслĕх пулать».

Сессисенче критикăпа самокритика çивĕч пулни вырăнти Советсен ĕçне лайăхлатма май паракан тĕп условисенчен пĕри пулса тăрать. Анчах, нумай Советсем сессисене начар ирттереççĕ, вĕсенче депутатсем сахал тухса калаççĕ, исполком ĕçне критиклемеççĕ. Сĕнтĕр район Совечĕн пĕрремĕш сессийĕнче «1952—1953 çулсенчи вăрман хатĕрлемелли сезон планне тултарасси çинчен» сӳтсе явнă. Сессире пулнă 24 депутатран виçĕ депутат кăна тухса каланă. Çак районти Хачăк ял Совечĕн иккĕмĕш сессийĕнче финанс планне тултарасси мĕнле пулса пыни çинчен сӳтсе явнă чухне пĕр депутат çеç тухса каланă. Ахмане ял Совечĕн сессийĕнче çуракине хатĕрленсе ирттересси çинчен сӳтсе явнă. Анчах, сессире пулнă 10 депутатран пĕри те тухса каламан.

Опыт çакна кăтартса парать: депутатсен творчествăлла пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ çине таянса ĕçлесен, сессисене хатĕрлеме депутатсемпе яланхи комиссисене, совет активне хутшăнтарсан сессисем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртеççĕ. Сессире сӳтсе явакан ыйтусене депутатсем пĕлмесен, сесси пуласси çинчен депутатсене вăхăтра пĕлтермесен ĕç ăнăçлăхĕ начар. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр чухне сессисем пухăнмаççĕ. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи Калайкасси ял Совечĕн иккĕмĕш сессине депутатсем пухăнман пирки ирттереймен. Çак сăлтава пулах Хачăк ял Совечĕн виççĕмĕш сессине виçĕ хутчен пухайман.

Республикăри вырăнти Советсенчен чылайăшĕ сессисене хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе паха опыт пухнă. Нумай çĕрте сессисенче депутатсен сĕнĕвĕсемпе канашĕсене шута илсе решенисем йышăнаççĕ, малтан пулса иртнĕ сесси решенийĕсене мĕнле пурнăçланине тăтăшах пĕлтерсе тăраççĕ. Апрелĕн 8-мĕшĕнче Улатăр хула Совечĕн сессийĕ пулнă. Унта хула благоустройстви енĕпе малтан йышăннă решение мĕнле пурнăçлани çинчен хула Совет исполкомĕн коммунальнăй хуçалăх пайĕн заведующийĕ каласа панă. Йышăннă решенисене пурнăçлани çинчен депутатсене тăтăшах пĕлтерсе тăни питĕ усăллă.

Вырăнти Советсен руководителĕсем сессисене хатĕрленсе ирттересси çине тимлĕ пăхма тивĕç. Сессисене вăхăтра тата организаци тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттермелле.

М. РОДИОНОВ,
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн информаци группин заведующийĕ.

Савăнсах ĕçлес килет

Эпĕ электросварщик. Чурачăк МТС-ĕнче ĕçлетĕп. Мана лайăх ĕçленĕшĕн пĕлтĕр Хисеп грамоти парса наградăларĕç. Эпĕ кăçал та лайăх ĕçлерĕм. Çавăншăн мана Ильинкăри канмалли çурта кайма путевка пачĕç.

Халĕ эпир кунта питĕ лайăх канатпăр. Лайăх канма пур условисем те çителĕклĕ. Вăхăта усăллă та культурăллă ирттерме пурте пур. Кунта канакансем пурте тĕрлĕ учрежденисемпе предприятисенче ĕçлеççĕ. Вĕсем çине пăхсан Совет правительстви халăх сывлăхĕшĕн яланах тăрăшнине аван туятăн. Çавна курса манăн малашне тата тăрăшарах ĕçлес килет.

И. АНДРЕЕВ.

Ильинка.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕнче

БУДАПЕШТ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн ĕнер ирхине пулнă ларăвне Го Мо-жо председатель пулса ертсе пынă. Кун йĕркинче тăракан пĕррремĕш ыйту—«Калаçусем иртерес тата тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас» ыйту тăрăх прениСем малалла пынă.

Канада писательници Лилиан Виен тĕнчери хутшăнусенче хĕсĕрлĕнсе вăрçă чĕнсе кăлармасăр калаçусем тăвас тесе аслă державăсене чĕнсе калани çине писательсене, художниксене, ученăйсене алă пустармалла тума сĕннĕ.

Англи ученăй-биохимикĕ, хими наукисем енĕпе Нобель премине илме тивĕçлĕ пулнă Ричард Синг çирĕп мир патне пымалли çул-йĕре палăртас тĕлĕшпе сесси делегачĕсем пурте пĕр шухăшлă пулнă пирки савăнни çинчен каласа панă. Çакăн пек çул-йĕр державăсем хушшинче калаçусем иртермелли çул-йĕр пулать.

Халиччехи пекех, тенĕ вăл, тĕнчене вăрçа кĕртсе яма парас мар тесе пирĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Ванда Василевская халăхсем хушшинчи культурăлла тата наукăлла çыхăнусене вăйлатма кирли çинчен каланă. Совет Союзĕнче, тенĕ Ванда Василевская, юлашки çулсенче ют çĕршывсенчен çĕршер делегацисем пулнă. Халиччехи пекех халĕ те ют çĕршыв авторĕсен кĕнекисене миллионшар тиражпа кăлараççĕ, Совет Союзĕнчи çĕршер театрсен сценисем çинче ют çĕршыв авторĕсен пьесисене кăтартаççĕ. Анчах эпир çакă та çителĕксĕр тесе шутлатпăр, мĕншĕн тесен, хальхи вăхăтра миршĕн кĕрешес тата пĕр-пĕринпе туслă пурăнас шухăш пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшине ытларах та ытларах сарăлать. Совет делегацийĕ çакăнта, Мир Совечĕн сессийĕнче, Совет Союзĕнчи обществăлла ушкăнсем ытти çĕршывсемпе культурăлла тата наукăлла çыхăнусем тытассине чылай аслăлатма хатĕр тăни çинчен пĕлтерме пултарать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ чĕннипе сессие килнĕ Франци аббачĕ Депьер хальхи вăхăтра çĕнĕрен миллионшар çынсем хăйсен ответлăхĕпе хăйсен вăйне ăнланса илнине палăртнă. Халăхсем çакна ăнласа илчĕç: тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатасси халăхсен хăйсен ĕçĕ, вăл халăхсем пĕтĕçÿллĕ пулнинчен килет.

Депьер «Пĕрлешнĕ Европа» çинчен калакан лозунг суя лозунг пулнине тăрă шыв çине кăларнă. Çакнашкал лозунг, чăннипе илсен, Европăна уйăрса ямалли милитаристла плансене витсе тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн бюро членĕ, мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Япони комитечĕн председателĕ Икуо Ояма Японире миршĕн кĕрешÿ вăйланса пыни çинчен каланă. Корейăра тыткăнри çар çыннисене улăштарса илесси çинчен калаçса татăлни Корейăра перемири тума чăрмантарса тăнă юлашки йывăрлăха сирсе ячĕ.

Икуо Ояма çакна палăртнă: перемири тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшакан малтанхи утăм пулнă пулĕччĕ, вăл Пĕрлешÿллĕ Штатсем Японие оккупацилесе тăмалли сăлтава пĕтерсе хунă пулĕччĕ.

Хальхи вăхăтра Японире, тенĕ малалла Ояма, миршĕн тата никама пăхăнманлăхшăн тăракан юхăм хăвăрттăн вăйланни сисĕнет. Миршĕн тата никама пăхăнманлăхшăн пыракан кĕрешÿре Япони халăхĕ пĕр пĕччен мар пулнине ăнланакан японецсен шучĕ ÿссе пырать. Вĕсен ĕçне пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракан çынсем пулăшса тăраççĕ. Китайпа тата Совет Союзĕпе дипломатипе суту-илÿ енĕпе йĕркеллĕ çыхăнусем тăвассишĕн тăрăшнине Япони халăхĕ ытларах та ытларах хапăл туса йышăнать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Эжени Коттон сесси кун йĕркинче тăракан иккĕмĕш ыйту—Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн пĕлтерĕшĕ тата унăн йышĕ çинчен тăракан ыйту тăрăх доклад тунă.

Эжени Коттон çапла каланă: Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн пĕлтерĕшĕ—халăхсемпе ялан çыхăну тытса тăрасси, тĕнчере пулса иртекен мĕнпур пысăк ыйтусем тăрăх халăхсене тĕрĕс пĕлтерсе тăрасси пулать. Çавăнпа та Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн халиччехи пекех хăйĕнречĕсенче тĕрлĕ шухăшлă, анчах та этеме хисеплекен, малашлăха ĕненекен, малашлăха мир пулăшнипе туса хума тăрăшакан тÿрĕ шухăшлă çынсене пĕрлештерсе тăрас пулать. Мир Совечĕн чăннипех пĕтĕм тĕнчери организаци пулса тăмалла.

Эжени Коттон Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессине демократла хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери федерацине кĕрекен 140 миллион хĕрарăм ячĕпе, çавăн пекех Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресне хутшăннă 70 çĕршыври хĕрарăмсен ячĕпе саламланă.

Ларура çавăн пекех Венгрири католиксен чиркĕвĕн архиепископĕ Цапик, Румыни делегачĕ Даниэль Лоппол, Чили генералĕ Карлос Вергара Монтеро, «Пакистан таймс» хаçат издателĕ Мазхар Алихан, Мир Совечĕ чĕннипе сессие килнĕ якобинецсен клубĕн председателĕ Эрню (Франци) тухса каланă.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ писатель Хуан Маринельо (Куба) тухса *калănă хыççăн, «Астьо до ла Вижери сессии малашнехи ĕçсем çинчен президиум»* тăратнă сĕнĕве калаçа панă.

Президиум çакăн пек комиссисем туса хума сĕннĕ:

1. Пĕтĕмĕшле политика ыйтăвĕсем тăрăх ĕçлекен комисси—унăн калаçусем иртермелли кампанин пĕтĕмĕшле принципĕсене палăртса хумалла.

2. *Çак кампание иртермелли практикăлла формăсемпе меслетсем туса хатĕрлекен тата Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн* пĕлтерĕшне пăхса тухакан комисси.

3. Культурăллă çыхăну ыйтăвĕсем тăрăх ĕçлекен комисси.

Кунсăр пуçне, президиум июнĕн 18-мĕшĕнче пĕрлехи ларусем иртермелле мар, делегатсен комиссисенче ĕçлемелле, тесе сĕнÿ тăратнă. Пĕрлехи ларусем июнĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен пуçланмалла.

Президиум сĕнĕвне пурте пĕр саслă пулса йышăннă.

* * *

Июнĕн 17-мĕшĕнчи каçхи ларăва Мир Совечĕн бюро членĕ Н. Тихонов председатель пулса ертсе пынă. Чи малтан Индири паллă ученăй профессор Сатьен Бос сăмах илнĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Инди халăхĕ миршĕн тăни çинчен каласа панă.

Японин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ пулнă Кумаици Ямамото сăмах илет. Вăл халĕ Японипе Китай хушшинчи суту-илĕве пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăна ертсе пырать. Япони Китайпа суту-илÿ тумасăр пурăнма пултараймасть, тенĕ вăл. Вăл çавăн пекех Китай Халăх Республикине ООН хăйĕн ретне йышăнасса шанса каланă.

Сесси делегачĕсем Вьетнам представительне Нгуен Ксюан Туя ăшшăн йышăннă. Вăл сессие хăйсен нациле никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен Вьетнамри миршĕн тăракансен ячĕпе саламланă. Нгуен Ксюан Туй Китай делегачĕ Го Мо-жо Инçет Хĕвелтухăç ыйтăвĕсем тăрăх туса каланине ырланă.

Вьетнам представителĕ малалла Вьетнам халăхĕ, Кхмер тата Патет-Лао халăхĕсем Пĕрлешÿллĕ Штатсем пулăшса тăракан Франци колонизаторĕсене хирĕç кĕрешни çинчен каласа панă.

Ковентри хулинчи муниципалитет членĕ лейборист Эдвард Диксон сăмах илнĕ. Вăл хăйне уйрăмах ĕнер Илья Эренбург тухса калани, вăл тухса каланă сăмахри икĕ вырăн интереслентерни çинчен каланă. Пĕррремĕшĕ—Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ мир пирки çĕр чăмăрĕн кирек хăш пайĕнчен килекен пуçарăва та ырлать. Иккĕмĕшĕнчен—Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договор çинчен аса илет.

Англи халăхĕ, тенĕ Диксон, çак договора тунă хыççăн питех те савăнчĕ. Çак договора çирĕп тытса пынă пулсан, тĕнчери лару-тăру хальхи пек йывăрланса çитмен пулĕччĕ, сивĕ вăрçă туса пыма та май килмен пулĕччĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн генеральнăй секретарĕ Жан Лаффит Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн пĕлтерĕшĕ тата унăн йышĕ çинчен калакан ыйту пирки чарăнса тăнă. Вăл Пĕтĕм тĕнчери Мир Советне миршĕн тăракансен Варшавăра 1950 çулхи ноябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ иккĕмĕш конгресĕ туса хуни çинчен аса илтернĕ. Мир Совечĕн тĕллевĕ—миршĕн кĕрешес ĕçре халăхсене ялан пĕр-пĕринпе тĕл пулма кирлĕ майсем туса парасси пулать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Советне туса хунине, тенĕ Лаффит, миршĕн тăракансен юхăмĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ историллĕ ĕç вырăнне хурса йышăнчĕç.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ вăл е ку режимăн, вăл е ку пурнăç йĕрки лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене сивлеме шутламасть. Вăл тĕрлĕ çĕршывсен шалти ĕçĕсене хутшăнмасть. Шалти ĕçсене татса памалли право çав çĕршывсенчи граждансен ĕçĕ пулса тăрать. Вăл çапла шутлать: мĕнпур çĕршывсенчи халăхăн ытларах пайĕ миршĕн тăрать. Вăл çак шухăшсене палăртса тăракан организаци пулма тăрăшать, миршĕн тăракан мĕнпур çынсене пĕрлештермелли решенисемпе конкретлă сĕнÿсем тупас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Мир Совечĕ йышăнакан решенисем мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăракан мĕнпур ыйтусене пырса тивеççĕ. Çак решенисем яланах халăхсен ирĕклĕ пурăнмалли прависемпе килĕшÿллĕ пулаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ тĕнчери ыйтусем тăрăх пуçару тăвать, çак пуçарăва мĕнпур халăхсем йышăнма пултараççĕ.

Ман шутпа, тенĕ малалла Лаффит, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн çакнашкал характерне малашне те сыхласа хăвармалла. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн политики тытăнса тăракан принципсене çапăлнех сыхласа хăвармалла. Вĕсем çаксем пулса тăраççĕ:

Тĕнчери халăх системĕсем пĕр-пĕрне те килĕшĕ пурăнма пултараççĕ тата килĕшĕ пурăнмалла та;

Нацисем хушшинчи мĕнпур хирĕçÿсене калаçусем иртеререн татса пама пулать.

Халăхсен сессии задачисенчен пĕри Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн иртнĕ тапхăрти пĕлтерĕшне тулли сутатса парасси пулать. Ку вăл пĕрре те хамăра хамăр чăнлăха палăртса тăракан пĕртен-пĕр çынсем, мирĕн пĕртен-пĕр вăйĕсем, тесе шутлассине пĕлтермест. Анчах та пирĕн Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене тĕрĕссипе сутатса памалла. Çакăн пек туни мĕншĕн кирлĕ-ха? Мĕншĕн тесен эпир хамăрăн задачăсене чылай енчен пурнăçласа çитерейĕмен-ха, пирĕн çĕнтерÿ чылай енчен тулли мар-ха. Эпир çакăншăн тăрăшмасан, нумайăшĕ çапла шутлама пултарĕç: халĕ, тĕнчери ыйтусене йĕркелесе яма май пурри çинчен калакан палăрăмсем пулса тăнă хыççăн, ĕçсем хăй тĕллĕнех лайăх енне улшăнса пырĕç, вара правительствăсем çăмăллăнах калаçса татăлма пултарĕç, дипломатсем халăх пуçланă ĕçе малалла туса пынипе татса парĕç, çавăнпа та, тен вара, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ тата миршĕн тăракансен юхăмĕ кирлĕ те мар пулĕ, теĕç. Тимсĕрлĕхе çакăн пек вăйсăрлатасси чăнахах та пулса тăрас пулсан, ку вăл мир ĕçĕшĕн питех те пысăк хăрушлăх туса хунă пулĕччĕ. Çавăнпа та эпир çапла шутлатпăр: хамăр тунă çитĕнÿсем пирки шарламасăр тăма кирлĕ мар. Халăхсем хăйсен вăйне ĕненсе тăрассине тата ытларах тĕреклетмелле, ыранхи пулас çитĕнÿсене тума кирлĕ условисем хатĕрлемелле.

Лаффит хускатнă иккĕмĕш ыйту—Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕпе ытти организацисем хушшинчи çыхăнусем çинчен тăракан ыйту. Вăл çак ыйту енĕпе ĕçлекен комиссие мĕнпур организацисемпе мир ĕçне пулăшакан организацисемпе тата тăрах çыхăнусем тума май паракан хатĕрсене пăхса тухма сĕнет. Ман шутпа, тенĕ Лаффит, çак майсемпе хатĕрсене калаçусем идейине хÿтĕлеме пулса яракан кампани ĕçĕсенче тупма тăрăшмалла.

Малалла Лаффит çапла каланă: Пĕтĕм тĕнчери Мир Советне 70 çĕршыв представителĕсем кĕреççĕ, унăн членĕсем 296 çын. Мир Советне ученăйсем, искусство деятелĕсем, промышленниксем, ĕççыннисем, писательсем, çар çыннисем, политика тата тĕн деятелĕсем кĕреççĕ. Анчах та паянхи куна Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн йышĕ унăн халăхри влиянине пĕтĕмпех тивĕçтерет, тесе шутлама çук. Нумай çĕршывсенче, Лаффит палăртнă тăрăх, миршĕн тăракансен юхăмĕ хальхи вăхăтра Пĕтĕм тĕнчери Мир Советне кĕмен вăйсем хушшинче сарăлса пырать. Тепĕр енчен, чылай çĕршывсенче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕпе тахçантанпа пĕрле кĕрешекен вăйсем пур, анчах вĕсем хăйсен çĕршывĕсенчи юхăмпа тачă çыхăну тытмаççĕ. Лаффит Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессине çак вăйсем валли хăйĕн алăкĕсене анăрах уçса хума сĕнет.

Каçхи ларура çавăн пекех тата Польша писателĕ, миршĕн тăракансен Польша комитечĕн председателĕ Ярослав Ивашкевич, Грета Форкхаммер (Дани), Египет представителĕсем Сеза Набрави, Демократла çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Жак Дени, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Голланди пасторĕ Гуго Ван Дален, Израиль представителĕ поэт Абрам Шленский, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Иоганнес Бехер (Демократиллĕ Германи Республики), Кристен Андерссон—миршĕн тăракансен Исланди комитечĕн председателĕ, Иранри спорт клубĕн руководительници Монир Мехрач, медицина докторĕ Андреа Андреен (Швеци), миршĕн тăракансен юхăмĕн Израиль представителĕ профессор Айзенштадт, Кăнтăр Африкări миршĕн тăракансен юхăмĕн активлă деятелĕ священник Томпсон тухса каланă.

БУДАПЕШТ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сесси делегачĕсем комиссисенче ĕçленĕ. Виçĕ комисси ларăвĕсем пулса иртнĕ: пĕтĕмĕшле политика ыйтăвĕсем тăрăх ĕçлекен комисси тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене тата тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе державăсем хушшинче калаçусем иртермелле тăвас тĕлĕшпе пуçласа ямз палăртнă кампанин пĕтĕмĕшле задачисене сÿтсе явать; Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн пĕлтерĕшĕ, йышĕ тата унăн ĕçĕн формисем тĕлĕшпе ĕçлекен комисси тата культурăлла çыхăну ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комисси ĕçленĕ.

„Нейес дейчланд“ хаçат ют çĕршывсене сутанна çынсене тăрă шыв çине кăларать

БЕРЛИН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес дейчланд» хаçат паян «Берлинра мĕн пулса иртнĕ?» ятлă умстатья пичетлесе кăларнă.

*Берлинра пулса иртнĕ йĕркесĕрлĕхсен ертÿçисем Демократиллĕ Германи Рес*публикинче юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕçсемпе çыхăнса тăраççĕ. Демократиллĕ Германи Республикин Хĕвеланăç Германири тăшманĕсем çакна ăнланаççĕ: пирĕн партипе правительство тытса пыракан çĕнĕ çул-йĕре—анлă массăсен пурнăç шайне хăвăрт лайăхлатмалли тата право хăрушсăрлăхне тĕреклетмелли çул-йĕре пурнăçлани вĕсене хыттăн пырса çапма, вĕсемшĕн катастрофа пулса тăма пултарать. Çакна вĕсем хăйсемех ышăнчĕç. Вĕсем хăйсемех пирĕн çĕнĕ ĕçсем çинчен калакан хыпарсем паллă пулса тăнă хыççăн Бонра сехĕрленсе ÿкни çинчен çырчĕç.

Вĕсем паян Якоб Кайзер Хĕвеланăç Берлинра, тесе çыраççĕ пулсан, çаксем вĕсем Бонн сехĕрленсе ÿкнипе Берлинри провокацисем хушшинче çыхăну пуррине яр-уççăн кăтартса параççĕ.

Пирĕн правительство тунă ĕçсем çинчен пĕлтернĕ хыççăн тепĕр темиçе сехетренех результатсем паллă пулса тăчĕç. Республикăран тарса каясси хăвăрттăн чакрĕ. Хĕвеланăç Германирен Демократиллĕ Германи Республикине каялла куçса килекен çынсен шучĕ, нумай вырăнсенче, Демократиллĕ Германи Республикинчен тухса каякан çынсен шутĕнчен чылай пысăкрах пулса тăчĕ. Халăхăн чи анлă сийĕ, уйрăммăн илсен, интеллигенципе халăхăн вăтам сийĕ те пысăк çĕкленÿпе ĕçе тытăнчĕç. Çакă вăл Хĕвеланăç Германири тата Хĕвеланăç Берлинри вăрçă чĕртекенсене сехĕрлентерсе ÿкерчĕ, вĕсем васкавлăн анлă шухăшласа хунă провокацие пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

Паян çаплах ăнланса çитмен тата провокацин тупсăмне чухласа илмен çынсен çакна пĕлес пулать: Демократиллĕ Германи Республикин правительстви зонăсем хушшинче тухса çÿремелли паспортсен режимне çăмăллатать, уйрăм çынсен аллинчи предприятисемпе уйрăм çынсен суту-илĕвне пулăшса тăрать, тарса кайнă пуян хресченсене хăйсен хуçалăхĕсене каялла тавăрса парать. Çав вăхăтрах фашистла агентурăсем, Демократиллĕ Германи Республики правительствин ĕçĕсене пăсас шутпа, çĕршер те пиншер провокаторсем ярса тăрать.

Вĕсем Хĕвелтухăçпа Хĕвеланăç Берлин хушшинче тухса çÿрес ĕçе çăмăллатнипе усă курса, хăйсем тара тытнă ирсĕрсене пирĕн патра массăллăн кĕртсе ярассине организацилеме тăрăшаççĕ.

Çак фактсем пирки тĕплĕн шутлама пултаракан çынсем ĕç тĕрĕссипе мĕнле пулнине ăнланса илме пултараççĕ. Паллах, ĕç кунта пĕрре те нормăсем çинчен тăракан ыйтура мар. Ку вăл уйрăмах правительство нормăсем çинчен тăракан ыйтăва ăнăçлăн йĕркелеме тивĕçлĕ решенисем йышăннă хыççăн паллă пулса тăчĕ. Провокаторсем çав вăхăтра хăйсен провокацине пуçласа ячĕç. Çавăн пекех кунта ĕç ирĕклĕ суйлавсенче те мар. Аденауэр режимĕ ирĕклĕ суйлавсенчен хăрать, вăл ирĕклĕ суйлавсем тума парас мар тĕллевпе ултавлă суйлав законĕсем хатĕрлет. Çав вăхăтрах пирĕн правительство пĕтĕм Германире ирĕклĕ суйлавсем ирттерме май паракан ĕçсем туса иртерет.

Хĕвеланăçĕнчи агентурăсем Демократиллĕ Германи Республикинче пĕтĕм халăх хутшăннипе тата пĕтĕм халăх пулăшнипе туса пыракан пысăк строительство ĕçĕсене чăрмантарма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та вĕсем пирĕн правительство тивĕçлĕ ĕçсем тунă хыççăн нимĕçсен пĕрлĕхне туса хурас тĕлĕшпе чылай малалла кайнă ĕçсене путлантарса лартма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та вĕсем Аденауэрпа *американецсем тытса пыракан вăрçă политикине сыхласа хăварма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ытларах та ытларах* пысăк йывăрлăхсем умне тухса тăни куç умĕнчех. Çавăнпа та вĕсем нимĕç халăхĕн пурнăçлă интересĕсене ирсĕррĕн пырса çапасшăн. Лейпцигерштрассе тата Унтер ден Линден урамĕсене провокаторсем çав тĕллевпе пынă.

Çак тĕллевпе пынă Америка офицерĕсем те. *Вĕсем демократиллĕ сектора фашистла отрядсен демонстрацийĕнче пулса* халăха хĕтĕртсе тăнă. Çак тĕллевпе Америкăн радиоустановкăсем вырнаçтарса лартнă автомашинисем килнĕ. Вĕсем фашистсен отрячĕсене кăтартусем парса тăнă! Çак тĕллевпе Америка самолечĕсем вĕçсе килнĕ. Вĕсем çинчен демократиллĕ сектор çине забастовка тума чĕнсе листовкăсем пăрахнă.

Провокаци путланса ларчĕ. Хĕвеланăçĕнчи агентурăсем темĕн пек çухăрашсан та çак факта пытарма пултараймаççĕ. Вĕсем Берлинри рабочисене пĕтĕмĕшле забастовка тума хĕтĕртнинчен ĕç тухаймарĕ тата тухма та пултарман, мĕншĕн тесен, нимĕç рабочийĕсем Америкăпа нимĕçсен монополистла капиталисчĕсем кăтартса панипе тата вĕсен интересĕсемшĕн хăйсен интересĕсемпе хăйсен правительствине хирĕç пĕтĕмĕшле забастовкăна хутшăнма пултарасси ытла та ăссăр, айванла идея пулса тăрать. Вĕсем халăхăн пĕр пайне темиçе сехетлĕхе аптратса ÿкерме тата хĕтĕртме пултарнă, анчах та халăхăн ытларах пайĕ провокаци хыççăн кайман, провокаторсем çине тăшманла пăхнă. Халăхăн пысăк пайĕ кунта хура вăйсем ĕçленине тĕрĕс ăнласа илнĕ. Вăл вăйсем нимĕç халăхне икĕ хутчен катастрофа патне илсе пынă. Вĕсен тĕллевĕ халăха виççĕмĕш хут катастрофа патне илсе çитересси пулать.

Çавăнпа та паян çапла калама пулать: хĕвеланăçĕнчи агентурăсем нумай вăхăт хушши анлăн хатĕрленсе тăнă провокаци путланса ларчĕ. Çакăнтан чылай ĕçсем туса тăма пултараççĕ. Çак провокацие пурнăçа кĕртес тĕллевпе вĕсем хăйсен пĕтĕм аппаратĕпе усă курнă. Провокаци тума майлă вăхăт килсе тухнă, тесе шутланă.

Провокаци путланса ларчĕ, мĕншĕн тесен, мир вăйĕсем халăхсене, вăл шутра нимĕç халăхне те, вăрçа кĕртсе ярасшăн мар. Анчах çакăншăн намăс: Хĕвеланăç Берлинри провокаторсен ирсĕр ĕçĕсене ăнласа илме йывăр пулман ĕнтĕ, анчах нимĕç рабочийĕсем вĕсен ирсĕр ĕçĕсем хыççăн кайнă. Çакăншăн та намăс: хăйсен хулине намăс кăтартакан ĕçе Берлин хулинчи рабочисем хăйсем чарса лартман. Оккупаци влаçĕ кăна чрезвычайнăй йĕрке туса хунипе нимĕç халăхĕпе мĕнпур халăхсен пурнăç интересĕсене кирлĕ пек хăюлăхпа хÿтĕлесе хăварнă.

Паллах, рабочи класс партийĕн çакăн çинчен тĕплĕн шутласа пăхмалла: Берлинри рабочи класăн, Берлинри ĕççыннисен пĕр пайĕ, ырă шухăшлă пайĕ (кун пирки иккĕленмелле мар ĕнтĕ) мĕнле майпа çакăн пек шанăçа çухатни пулма пултарнă, ĕççыннисен çак пайĕ хăйĕнпе фашистла вăйсем усă курнине асăрхаманни мĕншĕн пулнă. Кунта, паллах, пирĕн парти тунă пысăк çитменлĕхсем те пулнă. Унăн массăсене хисеплеме чылай лайăхрах вĕренес пулать, вĕсем мĕн каланине итлес пулать, вĕсен кулленхи пурнăçĕшĕн тăрăшас пулать. Нимĕн иккĕленмелли те çук, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ критикăпа самокритикăна вăйлатнипе çак задачăна ăнăçлăн татса пама пултарĕ.

Берлин халăхĕ авантюристсене сивлет

БЕРЛИН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинăн демократиллĕ секторĕнчи йĕркеллĕ пурнăçа пăсас тĕллевпе ют çĕршыв авантюрисчĕсен планĕ тăрăх хатĕрленĕ йĕркесĕрлĕхе халăхăн анлă масси йышăнман.

Хĕвеланăç Берлинра июнĕн 17-мĕшĕнче вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă хыççăн, фашистла провокаторсем Хĕвеланăç Берлина тухса тарнă, вырăнта тытнисене ответ тыттармалла тунă.

Берлинри предприятисем пурте, çавăн пекех государство учрежденийĕсемпе муниципальнăй учрежденисем, йĕркеллĕ ĕçлеме пуçланă.

Йĕркесĕрлĕх кăларма хăтланса пăхни ытти хăшпĕр хуласенче те пулнă. Йĕркесĕрлĕхе пур çĕрте те пĕр вăхăтра кăларма хатĕрленнĕ. Анчах та тара кĕрешнĕ агентсем çак путланса ларнă авантюрăна хатĕрленĕ ушкăнсен планне пурнăçа кĕртме пултарайман.

Отто Нушкене вăрласа кайнă пирки Демократиллĕ Германи Республикин правительстви панă протест

БЕРЛИН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

Июнĕн 17-мĕшĕнче 15—16 сехет хушшинче Америка секторĕнчен демократиллĕ сектора килсе кĕнĕ ирсĕр бандитсем Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕн заместителĕ Отто Нушке çине, вăл хăйĕн учреждениине кайнă чухне секторсем хушшинчи чикĕре (Варшауэр Брюкка), тапăннă. Вĕсем ăна автомобиль ăшĕнчен туртса кăларнă. Отто Нушке темĕн пек хирĕçнĕ пулсан та, бандитсем ăна Америка секторне тытса кайнă.

Штумм полицийĕ текен полици органĕсем вĕсене 109-мĕш полици участокĕнче тĕл пулнă. Радиопа пĕлтернĕ тăрăх, Отто Нушкене Америка çар влаçĕсен аллине тытса панă. Çак ĕç вăл çынна сĕмсĕррĕн вăрласа кайни пулса тăрать.

Правительство хăйĕн членĕсенчен пĕрне Америка çар влаçĕсем арестленĕ пирки хыттăн протест парать. Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Америка çар влаçĕсене премьер-министр заместительне Отто Нушкене халех арестрен кăтарма калать.

Протест çине Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ Отто Гротеволь алă пуснă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолечĕсем кăнтăр кăвешекен салтаксем паян тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн *пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:*

Июнĕн 18-мĕшĕнче икĕ енĕн штаб офицерĕсем, çыхăну офицерĕсен тата тăлмачсен уйрăм хупă ларăвĕсем пулса иртнĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн парламентри заместителĕ Антони Натти ĕнер общинăсен палатинче çапла каланă: хăйне паллă тăрăх, Корейăра перемири тăвасси çинчен Паньмыньчжоньра пыракан калаçусем «лайăх ăнăçлăхпа» палăрса тăраççĕ.

Америка авиацийĕ çаплах Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине тапăнать

ПХЕНЬЯН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине çаплах тискеррĕн тапăнать. Юлашки вăхăтра, Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка авиацийĕ уйрăмах Çурçĕр Хамгэн провинцийĕнчи ялхуçалăх районĕсем çине хаяррăн тапăннă. Июнĕн 13-мĕшĕнче тата 14-мĕшĕнче Бурен, Хверен, Юсон, Кенсон, Оран, Енан, Хватэ, Кильчжу, Ким Чак тата ытти уездсенчи ялсем çине темиçе хутчен те тапăннă тата пулеметсенчен пенĕ. Çак вăхăт хушшинче Чхончжинь хули çине питĕ хыттăн тапăннă. Хресчен халăхĕ хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай. Хресчен çуртĕсене темиçе çĕр таран ишĕлтерсе пĕтернĕ. Ялхуçалăх культурисене чылай çĕр лаптăкĕ çинче пĕтернĕ.

ЕГИПЕТ РЕСПУБЛИКИНЕ ТУСА ХУНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 18-мĕшĕнче каçхине Египет республикине туса хуни çинчен пĕлтернĕ. Генерал Нагиб президент тата премьер-министр пулса тăрать.

ЛОНДОНРА СОВЕТ КĔНЕКИСЕН ВЫСТАВКИНЕ УÇНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Коллет ятлă фирма совет кĕнекисен выставкине организациленĕ. Выставкăна çĕршер акăлчан пырса курнă. Выставкăна пĕтĕмпе 500 яхăн издани тăратнă. Вăл шутра вырăс классикĕсемпе совет писателĕсен произведенийĕсем, вырăсла тата акăлчанла кăларнă наукăпа техника литератури, Совет Союзĕн историйĕпе географийĕ çинчен кăларнă кĕнекесем, ача-пăча кĕнекисем, ют çĕршыв классикĕсен вырăсла куçарса кăларнă кĕнекисем.

Выставкăра уйрăмах ача-пăча кĕнекисем çине юратса пăхаççĕ. Куракансем Совет çĕршывĕнче ачасем валли лайăх кĕнекесем кăларнă тата вĕсен хакĕ йÿнĕ пулнă пирки питĕ тĕлĕнеççĕ.

ПИАНИСТСЕН ТĔНЧЕРИ КОНКУРСĔ

ПАРИЖ, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пианистсен Маргарита Лонг ячĕпе иртерекен тĕнчери конкурсĕн малтанхи тапхăрĕ вĕçленнĕ. Малтанхи тапхăра хутшăннă 89 пианистран 26 пианиста, вăл шутра Совет Союзĕнчен кайнă пианистсене Е. Малинин тата С. Нейгауз юлташсене иккĕмĕш те иккĕмĕш тапхăра хутшăнма ирĕк панă.

Хроника

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Василий Алексеевич Вальков юлташа Совет Союзĕн Югослави федеративлă халăх республикинчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕ пулма уйăрса лартнă.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

Кизел çĕр кăмрăк басейнĕнчи драма театрĕн

ГАСТРОЛĔСЕМ

Паян, июнĕн 20-мĕшĕнче, Чăваш академи театрĕн çуртĕнче

СТАРИК

(А. М. Горький çырнă 4 пайлă драма)

Спектакль 20.30 сехетре пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—июнĕн 20-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче илемлĕ фильм «Садко». 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Золушка» (çĕнĕ копи).

Бразилири моряксен забастовки

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви Рио-де-Жанейăран пĕлтернĕ тăрăх, Бразилири суту-илÿ флотĕнче ĕçлекен 8 пин моряк, вăл шутра офицерсем те, ĕç укçи ÿстерме тата ĕç условийĕсене лайăхлатма ыйтса забастовка пуçласа янă.

Забастовка суту-илÿ флочĕн ĕçне чарса лартнă.

Совет кино картинĕсен Монголири вунăкунлăхĕ

УЛАН-БАТОР, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Монголипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ пынă май, Монголи Халăх Республикинче иртерекен совет кино картинĕсен вунăкунлăхĕ вĕçленсе пырать. Вуншар пин аратсем, рабочисем, интеллигенци представителĕсем çак кунсенче Совет Союзĕнче кăларнă тата Монголи халăх чĕлхипе куçарнă документлă тата илемлĕ киновартинăсем курнă, совет кино искусстви çинчен калакан фотовыставкăсене пырса курнă, совет кино искусстви аталанни çинчен лекцисемпе докладсем итленĕ.

Юлашки кунсенче Улан-Баторти кинотеатрсенче 20 пин çынна яхăн пулнă. Монголи халăхĕ уйрăмах «Адмирал Ушаков», «Весна в Москве», «Возвращение Василия Бортникова», «Волки и овцы» картинăсене юратса пăхнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01148 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.